Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 5 ЫТЛАРИКУН
78 (4891)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Руководителсене вĕсен ĕçĕсен результачĕсем тăрăх тĕрĕслемеле

Чи çывăх кунсенчех парти организацийĕсем партин йертсе пыракан оргăнĕсене суйлама тытăнаççĕ. Çак кампани партилĕ-политикăлă ĕçе малала хăпартас тата парторганизацисем массăпа çыхăну тытассине сарас ĕçре пит те пысăк выранта пулать. Партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕ—вăл кашни парторганизацин, кашни руководителĕн, кашни коммунисăн кĕрешӳ пултарулăхне тĕплĕн тата тарăнăн тĕрĕслемели пулать. Çак тĕрĕслӳре парти организацийĕсем, парторганизацисен руководителĕсем вĕсен умне парти тăратнă задача мĕнле пурнăçа кĕртнине палăртмала.

Сталин йулташ пире хамăрăн работникесене вĕсен сăмахĕсем тăрăх мар, вĕсен ĕçĕсен результачĕсем тăрăх тĕрĕслеме вĕрентет. Пирĕн парти вĕсен сăмахĕсем ĕçрен уйăрălса тăман çынсене, хăйсен кулленхи ĕçĕнче Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлесине кăтартакан работниксене хаклать, вĕсене пысăкрах ĕçсене куçарса пырать. Партилĕ работникăн пахалăхĕ йанравлă сăмахпа мар тата вăл сăмах панипе мар, парти ăна йанă кирек хăш участкăра та ĕçе организацилеме пĕлнипе палăрать. Руководителсене вĕсен ĕçĕн результачĕсем тăрăх тĕрĕслемеле, ситменлĕхĕсене хăйуллăн, нимĕн шеллемесĕр тупса палăртмала, туман ĕçе тунă тĕкенсене, суйапа тăрă шыв çине кăлармала—акă çакă кирлĕ отчотлă-суйлав кампанине ăнăçлă иртерме, коммуниссен пĕтĕм массине вĕрентсе çитĕнтерме.

Бољшевиксем, парти комитечĕсен отчочĕсене сӳтсе-йавса, хăйсен руководителĕсене çыхă пулма хушшипех чарăнмаççĕ. Ку çителĕксĕр. Парти организаци тăшмансене хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен, çак коллектив икĕ питлисенчен, предателсенчен тасалса çитнипе çитменни çинчен, савăта йе государствă учрежденине шпион йе сăтăрçă кĕрсе каймала ан пултăр тесе тумали ĕçсене пурне те туни çинчен каласа пани кирлĕ. Фашисла разведкăсен агенчĕсемпе—троцкисла-бухаринла тасамарлăхпа кĕрешме парти пур коммуниссене, пур тӳрĕ ĕçлекен работниксене бољшевикла хатĕр тăма хушать. Парти Тĕп Комитечĕн феврањ-мартри Пленумĕ хыççăн парти çулталăк хушшинче парти ретне тăшмансенчен тасатас тĕлĕшпе туса иртернĕ пысăк ĕçсенчен пур вывăдсене те тумала. Çавăнпа та ĕнтĕ, бољшевисăма вĕренсе алла илес ыйту партин кашни организацийĕ умне пĕтĕм пысăклăхĕпе, хăйĕн пĕтĕм çивĕчлĕхĕпе тата конкретлăхĕпе тухса тăмала.

Партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕ çĕнĕ работниксене ĕçе лартасси мĕнле пынине, парти организацийĕ çак работниксене мĕнле вĕрентсе çитĕнтернине, вĕсене мĕнле пулăшнине тĕрĕслемели пулать. Кирек хăш савăтра-та, кирек хăш учрежденире те талантлă та пуçарулă çынсен кадрĕ нумай, вĕсене ӳсме тата ĕçе лартма алăк уçни çеç кирлĕ. Коммуниссем хăйсен руководителĕсенчен вĕсем çĕнĕ кадрсене ĕçе лартассине çăмăллатма мĕн туни, миçе çынна ĕçе лартни, вĕсем мĕнле вĕренни, мĕнле ĕçлени, парти комитечĕ партире тăман массăпа çирĕп çыхăну тытни, массăлă-политикăлă ĕçе мĕн чухлĕ анлăн сарни çинчен ыйтма тивĕçлĕ.

Парти ĕçĕн кирек-мĕнле ыйтуне те пит те конкретлă, тивĕçлĕ предприйати, тивĕçлĕ учреждени, тивĕçлĕ район ĕçĕпе çыхăнтарса сӳтсе-йавмала. Çапла тусан тин епĕр руководителĕн ĕçне бољшевикла тĕрĕслетпĕр. Пирĕн партилĕ-политикăлă ĕç йалтах парти умĕнче, çĕршыв умĕнче тăракан политикăлă-хуçалăхлă пысăк задачăсене пурнăçа кĕртмеле тăвас йенĕпе пулса пырать. Парти комитечĕсен отчочĕсене сӳтсе-йавни парти организацийĕ савăтăн, хапрăкăн, чукунçулĕн, колхозăн йе совхозăн ĕçĕсене ăнăçлă тума **политикă** йенĕпе мĕнле йертсе пынине, вăл государствă планĕсене тултарассишĕн мĕнле кĕрешнине тĕплĕн кăтартса памала.

Сăмахран, „Трехгоркăра“ брак пит ӳссе кайнă пулсан, халăха час-часах йурăхсăр продукци параççĕ пулсан, „Трехгорный мануфактурă“ хапрăкĕнче ĕçлекен коммуниссем хуçалăх ыйтăвĕсем çинчен, хăйсен предприйатин ĕçĕсем çинчен каламасăр иртме ăстан пултарччăр? Парти организаци руководителĕсем „Трехгоркăпа“ отличнă ĕçлеттерес тесе мĕн кирлисене пурне те туман пулмала, çак предприйатири, çăмăл промышлĕннăçăн ытти предприйатийĕсенчи партилĕ-политикăлă ĕç сăтăрлăхĕн йулашкисене хăвăрт пĕтерме çителĕклĕ пулса пымаст пулмала.

Тата шыв транспăртĕнче ĕçлекен коммуниссене, уйрăмах Каспи тинĕс пароходствинчи коммуниссене илер. Партин йертсе пыракан оргăнĕсене суйлама тытăнса вĕсем хуçалăх ыйтăвĕсенчен пăрăнса иртме пултараççĕ-и? Пуриншĕн те паллă, шыв транспăрчĕ питĕ начар ĕçлет, шыв транспăрчĕ çинче ĕçлекен коммуниссем кирек-мĕнле постра ĕçлеççĕ пулин те çакăншăн вĕсене айăп тивет.

Пурнăçра, практикăра политикăпа хуçалăха уйăрма çук. „Вĕсем пĕрле пурăнаççĕ, пĕрле пыраççĕ. Пирĕн политикăлă практикăра хуçалăха политикăран уйăрма шухăшлакан, политикăлă ĕçе пĕчĕкке хурса хуçалăх ĕçне вăйлăлатма, йе, пĕтĕмпех урăхла, хуçалăх ĕçне пĕчĕкке хурса политикăлă ĕçе вăйлатма шухăшлакан çын — вăл пур пĕрех тупике лекет“ (Сталин). Политикăлă тата хуçалăхлă ĕçсене пĕлсе çыхăнтарса пыни йаланах çĕнтерӳ патне илсе пырать, пирĕн партработниксен çак пахалăх пулмала.

Хуçалăхлă пысăк задачăсене татса парас ĕçре массăлă-политикăла ĕçсем мĕн тери пысăк выранта тăнине кăтартакан примерсене пурнăç çĕршер парать. Красноярскра пăравус деповĕ питĕ нумай вăхăт хушши ĕçе йĕркелеме пултарайман. Плана тултарасси уйăхран-уйăхах арканса пынă, стаханăвла йухăм чарăнса ларнах пуçланă. Парти организацийĕ лару-тăрува тĕплĕн вĕреннĕ, чи тĕп выранта тăракан ыйтусене татса пама тытăннă. Рабочисен аслă пухăвĕсене иртерниччен ĕçе тытăннă. Рйадовой работниксем мĕн калаписене тимлĕн итленĕ. Массăсен пуçарулăхне вăратнă. Партире тăракан тата партире тăман работниксене ĕçе лартнă. Цехсенче стена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăма тытăннă. Каçхи сменăсене кайса пăхнă, рабочисен кашни ушкăнĕпе калаçнă. Çапла, звеноран звенона кайса, парти организацийĕ депора ĕçе йĕркелеме пулăшнă, талантлă çĕнĕ работниксене ĕçе лартнă, депо, кайа йулнăскер, малта пыракан пулса тăнă.

Политикăлă тата хуçалăхлă ĕçсене пĕлсе çыхăнтарса тума пĕлни уйрăмах йалта пысăк выранта тăрать, халĕ унта çураки сарăлса пырать. Партин йалти организацисен руководителĕсен ĕçĕсене хакланă чухне тĕп выранта çураки пулать. Парти организацийĕсен вăйĕсене вăйлă тырпул никĕсене хывас ĕçе хумала, пур колхозниксемпе колхозницăсене плана тултарассишĕн кĕрешме мобилизацилемеле. Сейтлерски районĕн (Крым) опычĕ, — ун . çинчен „Правда“ хаçатра партин Сейтлерски райкомĕн çекретарĕ çырнă,—коммуниссем вăйлă тырпулшăн ăмăртăва пуçарсан, хăйсем стаханăвла ĕçĕн тĕслĕхне кăтартсан, мĕнле çитĕнӳсем тума пултарнине пит те лайăх кăтартса парать.

„Йертсе пыракан парторгăнсен суйлавне партилĕ-политикăлă ĕçе малашне пур майсемпе те хăпартса пырас, парторганизацисен массăпа çыхăну тытассине çирĕплетес, парторганизаци умĕнче тăракан политикăлă тата хуçалăхлă задачăсене ăнăçулăн пурнăçа кĕртес паллăпа иртермеле“, тенĕ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн постановленийĕнче.

Тĕп Комитет пирĕнтен çакна ыйтни, пире отчотлă-суйлав кампанине социалисăм строителствин çĕнĕ çĕкленĕве, халăх хуçалăхĕн пур отрăçлисенче те çĕнĕ çĕнтерӳсем памала туса иртерме хушать. Партин йертсе пыракан оргăнĕсене вĕсен сăмахĕ ĕçрен уйăрălман çирĕп те тĕрĕсленнĕ бољшевиксене, хăйулă та шанчăклă бойецсене суйласа, епĕр хамăрăн партине тата çирĕплететпĕр, çĕнĕ çĕнтерӳсене тата шанчăкларах кĕрешсе илетпĕр.

(„Правда“ умстатйи).

Ӳкерчĕк çинче (сулахайран): 1. „Трийĕр“ колхоз (Шăмăршă р.) председателĕ орденоносец М. Н. Капчикăв йулташ, колхоз председателĕ пулса 1931 çултанпа ĕçлет; 2. Елĕк райĕçтăвком председателĕн заместителĕ орденоносец Т. Куликов йулташ; 3. „Доброволец“ колхоз (Елĕк р.) председателĕ А. П. Миронăв йулташ, вăл хăйĕн колхозне пĕр çул хушшинчех районри малти вырăна кăларчĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Герой-папанинецсем Украинăра

Совет Сойузĕн Геройĕсем Папанин, Ширшов тата Кренкел йулташсем ĕççынисем чĕннипе апрелĕн 3-мĕшĕнче Кийевран Украинă тăрăх тухса кайнă, вĕсем Украинăн тĕрлĕрен хулисенче пулаççĕ. Çав кунах Папанин йулташ—Каменец-Подољска, Кренкел йулташ—Житомира, Ширшов йулташ—Винницăна пынă.

Совет Сойузĕн Геройĕ Федăрăв йулташ Кийева йулна, вăл апрелĕн 3-мĕшĕнче вăтам шкулсенче вĕренекенсемпе, педагогика институтĕнчи студентсемпе тата профессорсемпе тĕл пулса калаçнă.

Мазурукпа Фарих йулташсем Мускава çитнĕ

Совет Сойузĕн Геройĕ Мазурук йулташ тата љотчик-орденоносец Фарих йулташ тытса пыракан икĕ самољот апрелĕн 3-мĕшенче Мускава вĕçсе çитнĕ. Фарих йулташ самољочĕ çинче Мускава Совет Сойузĕн Геройĕ М. И. Шевелĕв йулташ вĕçсе килнĕ.

Çулталăк кайарах, папанинецсене Çурçĕр појусне антарса хăварма Мазурук йулташ ытти совет љотчикĕсемпе пĕрле Мускавран вĕçсе тухса кайнă. Çак операци хыççăн Франц-Иосиф Çĕре çине таварăнса, Мазурук йулташ нумай вăхăт хушши папанинецсен хисеплĕ вахтинче тăнă, куçса çӳрекен пăр çинче инкек-мĕн пулни çинчен перремĕш хут çигнал парсанах унăн машини сывлăша çĕкленме хатĕр пулнă.

Ийулĕн иккĕмĕш çуруйахĕнче Мазурук, љотчик-орденоносец Козловпа пĕрле, Франц-Иосиф Çĕре çинче темиçе хутчен те вĕçнĕ, çырансене фотоаппаратпа ӳкерсе илнĕ тата ӳкерчĕксем тунă, калама çук пысăк Архипелагăн картине тĕрĕс йĕркеленĕ.

Мазурук йулташ машини Мускава йĕркелех таварăннă, вăл машинă кирек-хăш минутра та çĕнĕ çула тухса кайма хатĕр.

(ТАСС).

Наградăсем панă

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Дзержинский йачĕпе тăракан Артиллери Академине вăл 20 çул тултарнине паллă туса тата командирсемпе инженер-артиллериссем хатĕрлес ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Ленин орденĕпе наградăланă.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе Ленинградри перремешпе иккĕмĕш Артиллери училищисене вĕсем 20 çул тултарнине паллă туса, граждăн вăрçи çулĕсенче çапăçнă чухне тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн тата командир артиллериссен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе çитĕнӳсем тунăшăн „Хĕрлĕ Çăлтăр“ орденĕпе наградăланă.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хатĕрленни

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине çĕршыври пиншер колхозсемпе совхозсем хатĕрленеççĕ. Вырăнсенче 14000 йахăн кандидата тупса палăртнă. Выставкăн Тĕп Комитечĕ 1780 кандидата тата выставкăна хутшăнакансене çирĕплетнĕ.

Хаљ выставкă территоринче чылай павиљйонсене туса çитерне.

Експонатсем пыма пуçлаççĕ. Узбекистанран сат çимĕç йăвăççисемпе декораци ваљљи пăхса ӳстерне ӳсен-тăрансен ешелонĕ çитнĕ. Çĕрмамăк акса тăвакан чи лайăх ăстаççем пăхса ӳстерне çĕрмамăк тĕмисене илсе пынă. Ибрагим Рахматăвăн Америкă çĕрмамăкĕ—156 пуç.

Выставкăра лартнă сат чĕрĕлме тытăннă. 10 пин сат çимĕç йăвăççи йуртан тасалнă. Сат çимĕç йăвăççисен турачĕсем çинче чечек паппкисем нумай. Çырла тавраш‌ĕсем нумай пулассине кĕтеççĕ.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Германи захватчикĕсене хирĕç

ПРАГĂ, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Чехословаки хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Австрире йышлă массăсем фашисла захватчиксем туса хунă режимпа килĕшменни ӳсет.

Çак кунсенче çеç Венăри „Сименс“ фирмин пысăк савăтĕнче çакăн пек факт пулнă: Матоушкă рабочине—çав савăтри „Доверенăйсен совечĕн“ председателне тата Австрири металлурги промышлĕннăç рабочисен профсойузĕн членне арĕслес тĕллевпе штурмовиксен тата Германи полицин отрйачĕ савăта пынă. Рабочисем Матоушкăна арĕслеме парас мар тесе часах ĕçлеме пăрахнă. Штурмовиксем Матоушкăна вăйпа илме хăтланнă. Рабочисем инструмĕнтсемпе хĕçпăшалланса штурмовиксемпе полицине савăтран хăваласа кăларнă. Тепĕр икĕ сехетрен Германи салтакĕсен отрйачĕ икĕ пулеметпа пынă. Салтаксем савăт территорине йышăнса илнĕ, цеха тапăнса кĕнĕ, Матоушкăна тата 54 рабочине арĕсленĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Китай çарĕнчи пулеметчиксем самољотсем çине пеме вĕренеççĕ.

(Сойузфото).

Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленет

ВАРШАВĂ, апрелĕн 2-мĕш. (ТАСС). Пољшă пичечĕ Германи фашисĕсен Чехословакине туртса илмели планĕсене çырса пĕлтернĕ. Пољшă хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Чехословакирен Судет облаçне туртса илес тĕлĕшпе Германи фашисĕсем пурте пĕр шухăшлă. Ку та сахал-ха, Берлинра пĕтĕм Чехословаки территорине Пољшăпа Венгри хушшинче валеççе йама шутлаççĕ.

Чехословакири политикă ĕçне туса тăракан çынсем фашисла Германи Йевропăра çĕнĕ çĕрсем туртса илме хатĕрленнине тимлĕн сăнаса тăраççĕ.

Чехсен социалисла хаçачĕ „Ческе слово“:—хăйĕн çине тапăнас мĕн пулсан, Чехословаки агрессăра отпор пама пĕлнине кăтартĕ,—тесе çырать.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра Леридă хули патне пынă çĕрте хайар çапăçусем пыраççĕ. Леридă вăл стратеги йенчен пысăк выран йышăнса тăракан пункт. Вăл хула Барçелонă патне кайакан тĕп çул çинче.

Апрелĕн 2-мĕшĕнче пăлхавçăсем, танксем тата авиаци пулăшса пынипе, Леридăран хĕвеланăçнеле республиканецсен позицийĕсем çине атакăланă. Республиканецсем хула хĕррисене чакса пынă та, тăшман малала тапăнса пынине чарса пыраççĕ.

Леридăран çурçĕр-хĕвеланăçнеле пăлхавçăсем наступлени тунине республиканецсем сирсе пăрахнă. Пăлхавçăсем пысăк çухатусем тунă.

Центрти фронт хăйĕн чи лайăх чаçĕсене хĕвелтухăç фронтне йарать Республикă чаçĕсем Гвадалахарă районĕнче (Мадридран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) çĕнĕ наступлени тунă. Ку районра республиканецсем чылай пунктсене йышăнса илнĕ.

(ТАСС).

Чехословакири рабочи массисем фашисла реакци сĕмсĕрленнине отпор пани

ПРАГĂ, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Чехословакире шалти политикăла лару-тăру çивĕчленни, реакцилĕ вăйсем тата чи малтан Германи фашисăмĕн агентури — Генлейн партийĕ республикăпа демократи çине атакăсем туни çĕршыври рабочи массисем пĕрлĕх фрончĕ туса хурассишĕн тăрăшассине вăйлатаççĕ.

Уйрăмăнах Судет нимĕçĕсен облаçĕн районĕсенчи пролетарилĕ организацисем пĕрле ĕçлени чаплă факт пулса тăрать. Вăл облăçăн чи паллă пункчĕсенче фашисăма хирĕç тăракан мĕн пур партисемпе профсойузсен пĕрлехи демонстрацисем пулса иртнĕ. Вăл демонстрацисем республикăна шалтипе тулти тăшмансенчен хӳтлес лозунгпа иртнĕ.

Чылай хуласенче фашисăма хирĕç тăракан партисен кĕрешӳ комитечĕсене тунă. Пĕтĕм рабочи партисем, çавнашкалах Йаблонец хулинчи профсойузсем майăн перремĕшĕнчи демонстрацийе пĕрле иртерме калаçса таталнă. Рйадовой социал-демократла рабочисем хĕснипе Аш хулинчи (çурçĕр-хĕвеланăç Чехинчи пролетарилĕ пысăк центр) социал-демократла партин округри руководстви округри коммунисла организацине округри мĕн пур рабочи организацисене пĕрлештерме сĕнсе чĕнсе каланă.

„Ситройен“ савăчĕсенчи забастовкă

Парижри „Ситройен“ савăчĕсенчи забастовкă тăвакан рабочисемпе служащисен делегацийĕ Франци правителствин условийĕсене йышăнма килнĕ. Правителствă, апрелĕн 4-мĕшĕнче ĕçе тытăнсан, хăйĕн арбитражне сĕннĕ тата забастовкă тăвакансене предприйати хуçисем хĕс-тересинчен хӳтлеме пулнă. Ĕçлеме пуçласан ĕçукçи тӳлеççĕ, тесе пĕлтернĕ правителствă.

Кĕскен

● Барçелонăра илнĕ сведĕнисем тăрăх, Франко Йапони правителствипе каласма пуçланă. Франко Йапониран темиçе çар суднисем сутăн илесшĕн йе вăхăтлăха усă курма илесшĕн, çавсемпе вăл республиканецсем шыва путарнă тата сийен тунă хăйсен крейсерĕсем вырăнне усă курасшăн.

● Прагăра (Чехословаки столици) апрелĕн 2-мĕшĕнче лăпкă саманапа демократине хӳтлекенсен пĕтĕм Чехословакири конгресĕ усăлнă.

(ТАСС).

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн X-мĕш çессийĕ

Апрелĕн 4-мĕшĕнчи каçхи лару

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн X-мĕш Çессийĕн апрелĕн 4-мĕшенчи каçхи ларăвĕ Чăваш АССР Государствă план комиççин содоклачĕпе пуçланчĕ.

Чăваш АССР Государствă план комиççин содокладне М. А. Андрейĕв йулташ туса пачĕ.

М. А. Андрейĕв йулташ доклачĕ хыççăн пренисем пуçланчĕç. Пренире çак йулташсем тухса каларĕç: Митков — Заготовкăсен халăх комиссариачĕн уполномоченнăйĕ; Вастрӳк—Суту-илӳ халăх комиссарĕ; Самарин—Вырăнти промышлĕннăç халăх комиссарĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти резервипе куллен-кун ĕçлесе пымала

ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1936 çулти çентаберĕн 29-мĕшĕнче „Парти ретне çĕнĕрен членсем илме пуçласси çинчен" решени йышăннă хыççăн Тутаркас районĕнчи организаци парти ретне çĕнĕрен 15 çын илнĕ, 11 çынна кандидатран члена куçарнă.

Парти ретне çĕнĕрен çынсем илнĕ чухне парторганизаци йаланах ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăтарса панисене çирĕппĕн асра тытса цынă. Партипе совет влаçне пĕтĕм чĕререн парăннă, лайăх ĕçлекен, малта пыракан шанчăклă çынсенĕ парти ретне илнĕ.

Парти ретне çĕнĕрен илнĕ йулташсем нумайĕшĕ колхоз строительствинче активлă ĕçлесе пырса, пит пысăк опытсем пухнă. Акă, тĕслĕхрен, Федор Иванăвич Веçелов йулташ. Вăл М. Горький йулташ йачĕпе тăракан колхоз председателĕ. Веçелов йулташ председател пулса ĕçлекен колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. 1937 çулта йалхуçалăх ĕçĕсене кăтартулă, лайăх иртерсе, вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Веçелов йулташ вăйлă тырпул маçтăрĕсен республикăри канашлăвне делегат пулса кайма тивĕçлĕ пулнă.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче вăл агитатăр пулса активлă та примерлă ĕçленĕ. Çапла лайăх ĕçлесе пынине кура, Веçелов йулташа районри ĕçе илнĕ. Халĕхи вăхăтра вăл Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн аппаратĕнче инструктăр пулса ĕçлет.

Колĕцов йулташ—ПСÇЛКС членĕ, Буденнăй йачĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ тата комсорг пулса ĕçленĕ. Колĕцов йулташ—тăлăххăн ÿснĕскер. Колхоза кĕричченех йалти кулаксем патĕнче тарçăра пурăннă, унăн хăйĕн çурт-йĕрĕ те пулман.—Мана совет влаçĕ çын турĕ, совет влаçĕ пулман пулсан, епĕ пайан кун та пулин кулаксем патĕнче тарçăра асапланса çÿренĕ пулăттăм, хам ĕмĕре пĕр хисепсĕр иттернĕ пулăттăм,—тет Колĕцов йулташ. Халĕ вăл колхозра ударник, примерлă ĕçлесе пырать. Тырпул унăн нумай, хăйĕн çурчĕ те, выльăх-чĕрлĕхĕ те пур. Колĕцов йулташăн кăтартулă, усăлă ĕçне шута илсе—ПСК(б)П райкомĕ ăна Шупашкара Коммунисла аслă шкула вĕренме йачĕ.

Парти ретне илнĕ йулташсем пурте партипе совет влаçне чунран парăнса ĕçлекенсем, вĕсем пурте обшчĕствăлă ĕçре хăйсен пултарулăхне кăтартнă.

Тутаркас районĕнчи парторганизаци парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе тунă хăшпĕр çитĕнÿсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те питĕ нумай-ха. Тĕп çитменлĕх вăл—çамрăксене болĕшевикла воçпитани парас ĕçе çителĕклĕ организацилеменни.

Районра мĕн пурĕ 900 комсомолĕц, вĕсенчен (1936 çултанпа) 9 çынна кăна парти ретне илнĕ. Çавăн пекех партире тăман активиссене сочувствуйушчисен ретне илесси те калама çук йапăх пырать. Ку ĕç хăй •тĕллĕнех пуласси çине шаннă. 1938 çулта мĕн пурĕ те 4 çынна кăна сочувствуйушчисен ретне илнĕ. МТС çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци ку тарана çитсе парти ретне илес тĕлĕшпе пĕр зайавлени те пăхса тухман. Парторганизаци МТС-ра ĕçлекен трактăриссен ĕçне куллен-кун сăнаса вĕренсе пымасть, лайăх ĕçлекен йулташсене парти ретне кĕме пулăшмасть. Халĕхи вăхăтра кунта трактăриссем 90 çын, вĕсем хушшинчен стаханăвĕцсемпе ударниксем сахал мар. Анчах, тÿрех калас пулать, парторганизаци ĕçлеменпирки парти ретне илме ыйтса панă зайавлени пĕре те çук-ха.

Хăшпĕр йулташсен парти ретне илме ыйтса панă зайавленисем нумай чухне пуçламĕш организацисенче тата парти райкомĕнче виçшер уйăх йе ытларах та выртнисем пулнă. Данилăв орденоноçĕцăн зайавленине Турайри пуçламĕш парторганизацинче 1937 ç. август уйăхĕчен пуçласа 1938 ç. март уйăхĕччен пăхса тухмасăр выртарнă. В. Пикусов йулташăн зайавленийĕ Илйинкăри парторганизацинче сакăр уйăх выртнă.

Парти ретне кĕрес текен йулташсене йурийех рекомендаци памасăр чăрмантарса пынисем те сахал пулман. Акă, çавăнпах ĕнтĕ „Çĕнĕ çул" колхоз çумĕнчи парторганизацинче икĕ çул хушшинче пĕр çынна та парти ретне илеймен. Ку парторганизацинче рекомендаци пама пултаракан коммуниссем сахал мар. М. Кĕçасĕв, П. Федăрав, В. Никифăрав йулташсем партире 1918—1919 çултанпа тăраççĕ. Парторг Никитин йулташ хăй те партине 1927 çулта кĕнĕ. Çак коммуниссем: „Пирĕн колхозра парти ретне кĕме йурăхлă çынсем çук", тесе сÿпĕлтетнĕ. Колхозниксем хушшинче болĕшевикла воспитани ĕçне организацилес тĕлĕшпе хăйсем нимĕскер те туманнине пытарса хăвараснăн пулнă. Партире тăман активиссем хушшинче болĕшевикла воçпитани ĕçне йĕркелесе йарас вырăнне, вĕсем пĕр-пĕрин çинчен елек сарнă, мĕнле те пулсан кирлĕ мар йапаласем турта-турта кăларнă, суйнă. Тимлĕн ĕçлес вырăнне елек ăшне путса, партилĕ ĕç çинчен, парти членĕн обйазаннăçĕсем çинчен манса кайнă.

Парти кандидатне кĕрекенсене йе кандидатран члена куçакансен зайавленийĕсене пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсенче пăхса тухнă чухне, партине кĕрекенсемпе рекомендаци паракансем хăйсем пулмали çинчен ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ 1936 çулти çентаберĕн 29-мĕшĕнче йышăннă решенийĕнче питĕ хытă асăрхаттарнă. Анчах партин хăшпĕр организацийĕсем çавна халĕ те кирлĕ пек ăнланса илеймен-ха. Турайри пуçламĕш организацинче, кăçалхи феврал уйăхĕнче, Д. Гурйĕв йулташа парти кандидатне илнĕ чухне рекомендаци паракан пĕр çын кăна пынă. Парти райкомĕ Турайри парторганизацин çак решенине пăрахăça кăларса, Д. Гурйĕв йулташ зайавленине тепĕр хут пăхса тухма хушнă.

Парти ретне çĕнĕрен илнĕ йулташсене политикăла воçпитани парас ĕçе тивĕçлипе организацилесе йаман-ха. Ку тĕлĕшпе парти райкомĕ те начар ĕçлет. Парти ретне çĕнĕрен илнĕ 15 çынран çиччĕшне парти вĕренĕвне йавăçтарман. Çавăн пекех райком инструктăрĕсем те пуçламĕш парторганизацисене кирлĕ таран пулăшса, вĕрентсе пымаççĕ. Хăшпĕр инструктăрсем райкомра ларсах вăхăта ирттереççĕ. Иванова инструктăр март уйăхĕнче районра пĕр хут кăна пулнă. Вăл пуçламĕш организацисенче пулса, коммуниссене ĕçре пулăшасси çинчен манса кайнă.

Тутаркас районĕнчи парторганизацин ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ПСК(б)П Обкомĕ те çителĕклĕ пулăшса пымасть-ха. Йертсе пыракан парторгăнсен пайĕн инструктăрĕсем района пырса, выранта кирлĕ пулăшу парса хăварас вырăнне, çитменлĕхсем çинчен телефон тăрăх анчах ыйтса пĕлеççĕ те лăпланаççĕ.

Тутаркас районĕнчи парторганизаци умĕнче тăракан задачă вăл—партилĕ политикăлă ĕçе татах та темиçе хут лайăхлатса йарасси, малта пыракан активиссене парти ретне илес ĕçе тивĕçлипе йĕркелесси пулса тăрать.

ПСК(б)П Тутаркас райкомĕн çекретарĕ Аниçимăв.

Партин çĕнĕ кадрĕсем ĕçре

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлана вăхăтра Шăмăршă районĕнче 300 çын ытла агитатăрсем пулса ĕçленĕ. Ку агитатăрсем хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтарнă. Вĕсенчен чылайĕшне халĕ районри йертсе пыракан вырăнсене ĕçлеме лартнă. Парти райкомĕн работникĕсем пурте пекех—çĕнĕ çынсем. Патăрйел райкомĕн инструктăрĕ пулса ĕçленĕ Сивкин йулташ халĕ Шăмăршă райкомĕн пĕррремĕш çекретарĕ. Райкомăн иккĕмĕш çекретарне райхаçат редактăрĕ пулса ĕçленĕ Андрейĕв йулташа лартнă. Райком инструктăрĕсем те çĕнĕ çынсем. Акă, хăма суракан савăтра кассир пулса ĕçленĕ Космовский йулташ халĕ райком инструктăрĕ пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçĕсене план тăрăх туса пырать. Йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Çеçÿкин—парти райкомĕн инструктăрĕ, кĕске вăхăтрах хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Вăл пулăшнипе Пашйелĕнчи пуçламĕш парторганизацинче партилĕ-политкăлă ĕçе чылайах лайăхлатнă. Халĕ кунта 5 çынна сочувствуйушчисен ретне илнĕ, 4 çынна партине илнĕ. 3 çынна кандидатран парти членне куçарнă. Нумай пулмасть, 1925 çултанпа парти кандидатĕнче тăнă М. Архипăва йулташа парти членне куçарнă. Архипăва йул. 1928 çултах партине куçарма ыйтнă, куçарнă та ăна. Анчах парторганизаци документсене çухатнă пирки вăл парти билетне илеймен. Иккĕмĕш хут Архипăва йулташа 1932 çулта парти членне куçарнă, ун чухне те вăл парти билетне илме ĕлкĕреймен.

Хăма суракан савăтра машинис пулса ĕçленĕ И. Корчагин йулташа хăма суракан савăт директăрĕ туса хунă. Вăл начар ĕçлемест. Халĕ савăт валĕçи, çу вăхăтĕнче ĕçлеме, çителĕклĕ материал хатĕрлесе хунă. Корчагин йулташ ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлана вăхăтра участкăри суйлав комиççинче ĕçленĕ.

Суйлав вăхăтĕнче активлă ĕçленĕ Воронцовă учителницă агитатăра халĕ комсомол райкомĕн çекретарĕ туса хунă. Воронцовă йулташ ĕçлеме тытăннăранпа комсомол организаци ĕçĕ лайăхланни палăрать. Вăл пĕрмайах комсомолăн пуçламĕш организацисенче пулать, вĕсене вĕрентет, ĕçре пулăшать. Пропагандиссемпе çеминарсем ирттерме тытăннă хыççăн, комсомол кружокĕсем те лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ çамрăксене комсомола илес ĕç те вăйланчĕ. Воронцовă йулташ хăй те парти кандидатне кĕчĕ.

Шăмăршă районĕнчи коммуниссенчен 30 çын ытла йертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеççĕ. Парти райкомĕ вĕсене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă. Парти райкомĕ çĕнĕ çынсем мĕнле ĕçлени çинчен очотсем илет.

В. Перлов.

Комсомол активĕн районри пухăвĕ

ЕЛĔК. Мартăн 28-мĕшĕнче комсомол активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн 5-мĕш пленумĕ çинчен комсомол Чăваш Обкомĕн çекретарĕн заместителĕ Арзамасĕв йулташ доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн чылай комсомолĕцсем тухса калаçрĕç.

Елĕк районĕнчи комсомол организацин те комсомолĕцсене комсомолран кăларнă чухне пысăк йăнăшсем пулнă. Комсомол райкомĕ комсомолĕцсене, вĕсен ĕçне тĕплĕн пăхмасăр, елекçĕсем хыççăн кайса, айăплă маррисенех айăплă туса, тÿрех комсомолтан тата ĕçрен те кăларнă.

Акă, Елĕкри вăтам шкулта вĕренекен Волкăвпа Байкова йулташсене комсомолран пĕр айăпсăрах кăларнă пулнă. Вĕсем шкулта пур предметсемпе те лайăх вĕренсе пыраççĕ. Халĕ, çав ĕçе тепĕр хут пăхса тухсан, вĕсене комсомол ретĕнчех хăварнă.

ПСК(б) Парти райкомĕнче инструктăр пулса ĕçлекен Данилăв йулташа та партинчен те, комсомолран та тĕрĕс мар кăларнă пулнă. Ăна Шупашкарти пединститутра вĕрентсе пурăнакан Данилăвпа (вăл пиччĕшĕ) çыхăну тытса пурăннă тесе айăплана. Халĕ Данилăвăн ĕçĕсене пăхса тухнă, ăна парти ретне те, комсомол ретне те кайала илнĕ.

Тухса калаçакансем елекçĕ-карйериссен ĕçĕсем çинчен, вĕсемпе малашне кĕрешмели çинчен хыттăн палăртрĕç.

Районри прокурор ĕçне вăхăтлăха туса пынă комсомолĕц П. И. Çмирнов районри паллă елекçĕ-карйерис пулнă. Вăл районра ответлă вырăнсенче ĕçлекен йулташсем (П. С. Меценатăвă, С. В. Дубинин, Моисейĕвă, Архипăв, Никандрăв т. ыт. те) çинчен вырăнсăр, темĕн тĕрлĕ суйа елек сарнă, вĕсене айăплама суйа материалсем пухса хатĕрленĕ. Çаксене шута илсе ăна комсомолран кăларнă.

Елĕк районĕнче çамрăксене комсомола илес ĕçре те çитменлĕхсем пулнă. Çамрăксене комсомола илнĕ чухне комсомола кĕрекенсене политикăлă екзамĕн туса илнĕ. Çавăнпа та çамрăксем политикăла екзамĕн парассинчен хăраса, комсомола кĕмесĕр тăнă.

Районра 127 колхоз, вăл колхозсенчен 45 колхозĕнче комсомол пуçламĕш организацисем çук. Чылай комсомол организацисенче çамрăксене комсомола илес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ.

Йулашкинчен комсомол активĕн пухăвĕ тунă йăнăшсене хăйулăнрах тÿрлетсе пыма, малашнехи ĕçсене лайăхлатса пынипе халăх тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыма пулса решени йышăнчĕ.

Ф. Филиппăв.

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене саратпăр

Нумай пулмасть Шупашкар хули советĕнче ĕçлекенсен пухăвĕ пулчĕ. Пухура Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене кăларни çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçре мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен доклад туса пачĕç. Доклад хыççăн пухура пулнисем пурте пĕр сасăпах çапла каларĕç:

— Осоавиахимăн лотерей билечĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăни пире паллă, —укçа-тенкĕ хамăрăн социалисăмла тăван çĕршывăн оборонине çирĕплетме кайать. Епĕр пурте лотерей билечĕсене сыратпăр, тăван çĕршыв çине нимĕнле тăшман та тапăнма ан хăйтăр, терĕç. Пухура чи малтан сторож Шахмăтăв йулташ тухса каларĕ:

—Епĕ хулари финанс пайĕнче ĕçлекен сторăж. Парăр мана 5 тенкĕлĕх лотерей билечĕ, терĕ. Ун хыççăн Ахлатина йулташ сăмах илчĕ.

—Мана партипе совет правителствин чухăн килхуçи хĕрарăмĕнчен государствăн активлă работницци турĕ. Епĕ халĕ хула советĕнче социаллă пулăшу пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлетĕп. Пирĕн çĕршыв никам пырса кĕрейми крепăç пултăр. Парăр мана 15 тенкĕлĕх лотерей билечĕ, терĕ.

Пурте лотерей билечĕсене туйанчĕç.

Хулари урам комитечĕсем те лотерей билечĕсене сарма тытăнчĕç. Вĕсем лотерей билечĕсене сарма 1225 тенкĕлĕх илчĕç.

—Ку сахал-ха пире, билетсем патне епĕр татах та килетпĕр, терĕç билет илме пынисем

Золотников.

СЕНТĔРВАРРИ. Районри пур предприйатисенче, шкулсенче, учрежденисенче, колхозсенче Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене сарас ĕçе анлăн пуçарса йачĕç.

Мартăн 27-мĕшне Сĕнтĕрвăрри хулинчи çĕвĕ çĕлекен ертелре ĕçлекенсем хушшинче 600 тенкĕлĕх, Вăрман ĕç техникумĕнче 1000 тенкĕлĕх, Йалхуçалăх техникумĕнче 1500 тенкĕлĕх, спирт савăтĕнче—1000 тенкĕлĕх, ача-пăча комиççин катка-пичке савăтĕнче—1500 тенкĕлĕх сарчĕç.

Лотерей билечĕсене чылайĕшĕ 20-шер, 30-шар тенкĕлĕх илеççĕ.

В. Васийĕв.

ТРАК. Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене сарас ĕç вăйлансах пырать. Апрелĕн 1-мĕшне ПСК(б)П райкомĕнче—300 тенкĕлĕх, государствă банкĕнче—108, райçĕрĕç пайĕнче—327, райĕçтăвкомра—300, районри финанс пайĕнче—359, хатĕрлев кантурĕнче ĕçлекенсем хушшинче—140 тенкĕлĕх сарнă.

Лотерей билечĕсене сарас ĕç колхозсенче те анлăн сарăлса пырать: „Çĕнĕ хуçалăх" колхозра—300 тенкĕлĕх, „КИМ" колхозра—200, Каганович йулташ йачĕпе тăракан колхозра—300, „Илйич" колхозра 100 тенкĕлĕх сарнă.

Районри ĕççыннисем лотерей билечĕсене илсе, укçине çав вăхăтрах парса татаççĕ.

Закамский.

Колхозри парткабинет ĕçне йĕркелемеле

КУСЛАВККА. Тĕрлемесри колхозра парткабинет организациленĕ. Кунта Ленин—Сталин произведенийĕсем тата ытти кирлĕ кĕнекесем те çителĕклĕ. 1937 ç. парткабинĕт пуçлăхĕ пулса Ф. Дмитрийĕв йулташ ĕçленĕ вăхăтра парткабинет хăйĕн ĕçне йĕркелĕ туса пыраччĕ. Политкружоксем ĕçлетчĕç, кружоксенче вĕренме кирлĕ литературăсем йаланах хатĕрччĕ. Ф. Дмитрийĕв йулташа районa ĕçлеме илнĕренпе парткабинет ĕçĕ сÿнсе ларчĕ. Икĕ уйăх хушши ытла ĕнтĕ вăл хупă ларать.

Парткабинет ĕçне йĕркелесе йарас тĕлĕшпе парти райкомĕнче ĕçлекенсем те нимĕнле пулăшу та памаççĕ.

И. Харитонăв.

Й. ВИКТĂРĂВ

1914—1918 çулсенчи вăрçă вăхăтĕнчи шпионаж

Томсон çырнă „Вăрçă вăхăтĕнчи шпионаж" йатлă кĕнекене*) нумайах та пулмасть вырăсла куçарса кăларнă. Çак ыйтура Базил Томсонран ытларах пĕлекен автăр Йевропăпа Америкăра тупăнмасть те пулĕ, кĕнеке автăрĕ Томсон черетлĕнех Британин уголовнăй розыск пуçлăхĕ пулнă, унтан Британи контрразведкин шефĕ, тата, йулашкинчен, паллă Интеллидженс Сервисăн мĕн пур пайĕсен руководителĕ пулнă. Йоркри архийепискăн ывăлĕ, Оксфорд университетĕнчен вĕренсе воçпитани илнĕскер, вăл—пĕтĕм шăммишаккипе тата йунĕпе Британири пуçпулса тăракан класпа çыхăнса тăрать. Томсон ытти çĕршывсенчи разведкăсен тискер ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса Англи шпионĕсен унтан сахалах мар хура ĕçĕ пирки шарламасăр иртнинчен тĕлĕнмели çук.

Германи шпионĕсем организациленĕ диверçисем, сăтăрлă актсем, вĕлернисем çинчен Базил Томсон нумай фактсем илсе кăтартать. Вăл çав шпионсен йачĕсене асăнать. Вăл Германи разведкин тĕлĕнмеле тискер мелĕсем çинчен каласа парать. Калав, тахçан-авал иртсе кайнă кунсем çинчен калакан повеç пекех, лăпкăн йухса пырать. Анчах та çав тахçанхи йунлă ĕçсен геройĕсем хушшинче, ылханлă троцкисла-бухаринла шпионсен меслечĕсенче Германи шпионажĕн традицилĕ шкул йĕрĕсене асăрхана пекех, епĕр фашисла „Виççĕмĕш империн" хăшпĕр паллă дипломачĕсене палласа илетпĕр.

Томсон каланă тăрăх, ăна Лондонри полици управленийĕ çумĕнчи уголовнăй розыск пуçлухĕ туса хунă, мĕншĕн тесен вăл „преступник-профессионалсен характĕрне тарăнăн ăнланнă". Çакăх ĕнтĕ ăна Интеллидженс Сервиса ĕçлеме илмели тĕп сăлтав пулнă пулмала, мĕншĕн тесен буржуалă разведка çыхăнса ĕçлесе тăракан çынсене, тĕпрен илсен, Йоркри архийепискăн ывăлĕ вĕсен характĕрне лайăх ăнланакан çынсенчен йавăçтараççĕ.

„Англипе Франци Афинăри вăрттăн полицинчи 162 çынтан,—тесе çырать Томсон,—60 агент çеç Грецире çуралнăскерсем пулнă. Греци полицин профекчĕ алă пуснă официаллă спискине пăхсан, епĕр вĕсен шутĕнче çакăн пек çынсене тупатпăр: çынвĕлеренсем саккăр, бандит пулнисем тăххăр, кăсйе çаратакансем çиччĕ, контрабандиссем вуннă, вăрăсем вуннпĕр, шулĕрсем çирĕмпĕр, чĕрĕ таварна (çынсемпе) суту-илÿ тăвакансем çирĕм, ыттисем—мĕнле доходпа пурăнни паллă мар".

Ку вăл, паллах, шпионсене тĕрмесемпе вăрă притонĕсенчен çеç пухнине пĕлтермест. Германи разведки çынсене обшчĕствăри тĕрлĕрен сийсенчен пухса йавăçтарнă. Пианист Брекоф, скрипач Бушман, художник Гаген, шултра савăт хуçи Джонас, журналис Бекон, Англи парламĕнчĕн членĕ Трейбич-Линколĕн, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен генералĕнăй прокурорĕ Моннет—вĕсем пурте Германи шпионĕсем пулнă.

Центрти тата Кăнтăр Америкăри çĕршывсем тĕнче вăрçи вăхăтĕнче нимĕçсем валĕçи шпионла матерал тупмали пит пуйан резервуар пулнă, тесе палăртать Томсон. Çакăн пек асăрхаттарни вăл пайанхи кунччĕнех тĕрĕс пулса тăрать. Анчах вăрçă хыççăнхи çулсенче Германири фашисла разведка Йевропăра та çавăн пек резервуарсемех туса хучĕ. Чехословакири Сÿдет облаçĕ, Литвари Мемĕл облаçĕ, Полĕшăри Познан тата Тури Силези, Даниri Çурçĕр Шелезвиг—çаксенче пуринче те фашисла шпионсем йăпăлтатаççĕ, вăл шпионсем пĕрре сигнал парсанах вĕлерме, сăтăрлама, сиктерсе йама, емел парса вĕлерме хатĕрех тăраççĕ. Çавăн пек шпион йăвисемпе çыхăну тытма Гестапон йатарласа тунă организаци пур.

Тĕнче вăрçин опычĕ, нумай ĕçсем аркана-аркана кайнин урокĕсем Германи разведкине мĕн те пулсан вĕрентрĕç, ĕç метăчĕсене улăштарма хушрĕç, анчах та Германи разведкин чылай мелĕсене, Томсон çырса кăтартнисене, халĕ те сăнаса илме пулать. Нумайах та пулмасть, сăмахран, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче Германи шпионĕсен центрне уçса палăртни çинчен хаçатсем çинче пичетлесе кăларнă пулнă. Шпионсем Америкă паспăрчĕсене вăрланă чухне тытăннă, çав паспăртсем вĕсене „Америкă турисĕсене" (фашисла диверсантсене,—тесе вула) Совет Сойузне йама кирлĕ пулнă. Нимĕçсем 1938 çулта та 1914 çулхи мелсемпех усă курнă иккен. Вăл çул октăбер уйăхĕнче çавнашкал туриссенчен пĕрне, темĕнле Чарлз А. Инглиза Англи разведки йарса тытнă пулнă. Следстви çакна тупса палăртнă: „Америкă турисĕ" Чарлз Инглиз (вăлах Германи флочĕн офицерĕ Карл Ганс Лоди) Германи адмиралтействи валĕçи çар сведенийĕсем пуçтарнă. 1914 çулхи нойаберĕн 5-мĕшĕнче Лодине персе вĕлернĕ. Редшиналд Ролланд, пуйан „американĕц, сиплĕнес тĕллевпе çулçÿрекенскер" (вăлах Германи шпионĕ Брекоф), хăйĕн умĕнхи шпион пекех пурнăçне хуйхăллăн пĕтернĕ. Вĕсем хыççăн та чылай „американĕцсем" пынă. Çапах та, нимĕçсен Америкă паспăрчĕсене йуратасси сÿнмен курăнать-ха.

Шпионсене йавăçтарас тесе Германи разведки мĕн пур çĕршывсене социалис-вербовшчиксем кăларса йанă. Çĕрлехи притонсемпе хупахсенче çапкаланса çÿресе, лашасемпе ăмăртса чупнă çĕре тата аскăн вăйĕ вырăнĕсене пырса курса, çав етем чунне тытакансем кашни вылĕçаса йанă тата ĕçсе ÿсĕрлнĕ çынна тимлĕн сăнаса тăнă, хăйĕн тăван çĕршывне пăрахса тăшмана сутăннăшăн фунтсемпе долларсем парса, ăна инкекрен „çăлнă". Германи империн официаллă дипломачĕсем те вербовшчисен ĕçне тума йĕркенсе тăман. Германин Роттерцамри генералĕнăй консулĕ Глейст, Голландири çар атташи рейхсвер полковникĕ Остертаг, Германин Швецири çар атташи, Германин Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи посолĕ Бернсдорф тата Германин ытти нумай дипломачĕсем, Томсон кăтартса панă тăрăх, шпионсене йавăçтарас тĕлĕшпе пит те активлăн ĕçленĕ. Çак вăл Германин йутçĕршыв ĕçĕсен министерстви укçа-тенкĕ ним хĕрхенмесĕр тыткалани çинчен каласа парать, Германи подданнăйĕсен нимĕнле коммерцилĕ интерес те çук хуласенчех консулĕствăсем тытса тăнă çĕре йутçĕршыв ĕçĕсен министерстви пит нумай укçа-тенкĕ тăкакланать.

Германин официаллă представителĕсен ытти ĕçĕсемпе танлаштарсан, шпионсене йавăçтарни çапах та ача вăййи пек çеç туйăнать. Çав ĕçсем çинчен—сăтăрлани çинчен Томсон кĕнекинче чылай çутатса панă, çав сăтăрла ĕçе çар атташи фон-Папен тата унăн помошникĕ фон-Ринтелĕн вăрçа хутшăнман Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче туса пынă.

Пурте пĕлеççĕ, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем вăрçă пуçлансан малтанхи çулсенче вăрçакан икĕ йенне те хĕçпăшалсемпе çимĕçсем парса тăнă. Америкă сыранĕсене блокадă тума май пулман пирки, Германи урăхла план хатĕрленĕ. Унăн агĕнчĕсем, фон-Папен йертсе пыракан-скерсем, сойузлă çĕршывсене кайакан пăрахутсен трÿмĕсене никама систермесĕр тамăк машинисем (сиктерсе йама) вырнаçтарса лартнă. Усă тинĕсре пушар сиксе тухнă та, суднă мĕн пур екипажĕпе пĕрлех океан хумĕсем çинче пĕтнĕ. Çав вăхтрах Папен тата унăн тарçисем çар склачĕсемпе верфсене сиктерсе йанă, суднасем çине снарйадсем тийекен докерсен забастовкисене организациленĕ, т. ыт. те. Германи шпионĕсем Америкăри рабочисен йухăмне те кĕрсе кайнă, докерсен профсойузне организациленĕ.

Акăлĕчансем Германин çекретлă шифрисене хăвартах вуласа ăнланма пултарнă, вĕсем суйа телеграммă йарса Ринтелна Англине чĕнсе илнĕ те, ăна вара Англире арĕсленĕ. Йулашкинчен Ринтелн, Папен çине тата Германин Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штачĕсенчи посолĕ Бернсдорф çине тарăхнăскер Германин дипломат-диверсанчĕсен сăтăрла ĕçĕсем çинчен хăйĕн мемуарĕнче хăйех тĕпчесе каласа панă.

Томсон пысăккăн хаваслансах çакна палăртать: усă вăрçăра Германи офицерĕсем ытлашши хăйулах мар, вăрттăн, шпионла вăрçăра хăйулăрах,—тет.

„Фон-Папен çинчен пирĕн çĕнĕрен илтме тиврĕ,—тесе çырать Томсон.—Çак салонри войакăна, действителĕнăй службăра нихăçан та тăманскерне, çапăçакан çарти пурнăçа тутанса пăхма тесе Палестинăна йанă пулнă. 1918 çулта кĕркунне Еленби лордăн çарĕсем Турци çарĕсене тытса лăскасан, Британи кавалерийĕ пушă палаткă патне пынă, палаткă хуçи, пит нумай документсем пăрахса хăварса, тухса тарнă пулнă. Лондăна телеграммă йанă, сас-хурасене ĕненес пулсан, унтан çакăн пек ответ илнĕ: „Документсене йарса парăр. Фон-Папена тыткăна илнĕ пулсан, ăна концентрацилĕ лагĕре ан хупăр, анчах та ăна ăсран тухнисен çывăхри çуртне лартăр".

1938 çулхи март уйăхĕнче фон-Папен çинчен çĕнĕрен илтме тиврĕ. Салонри войакă, халĕ ĕнтĕ Германин Австрири чрезвычайлă посолĕ, хăйĕн дипломатилĕ миççине 1915 çулхи пек мар, урăхларах пĕтерчĕ. Унчухне ăна Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене намăслăн йанă пулнă. Халĕ ĕнтĕ вăл Австрирен „çавнашкаллине пĕтерсе хунă пирки" тухса кайнă. Австрире дипломатилĕ пысăк ĕç тунăшăн Папен Гитлĕр аллинчен ылттăн медал тата... фашисла партине кĕмели ирĕк илнĕ.

Хăйĕн кĕнекин икĕмĕш пайĕнче Томсон сойузлă разведкăсем Грецире тĕнче вăрçи вăхăтĕнче мĕн ĕçленине çутатса парать. Тÿрех каласан, Томсон кунта Франци разведки çинчен çеç каласа парать, çавăнпа та, краскисене шеллемесĕрех, Грецине сойузниксен йенне туса вăрçа хутшăнтарас тесе француз агĕнчĕсем усă курнă провокацилĕ ирсĕр картинăна сăрласа кăтартать.

Франци разведкин шефĕ де Рокфей „прексем" Франци миççи çине тапăнассине мĕнле организацилени çинчен çырнă калав пит те интереснă.

„Париж журналисĕ, капитан Шансор,—тесе çырать Томсон,—Венанпа, Лафонпа тата Роланпа, дерокфейевск организацин офицерĕсемпе тата Боланиспа пĕрле, çынсене вуншарăн уйăрнă та, вĕсене пăшал салатса парса çакăн пек приказ панă:

— Ыран, çентаберĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет те 05 минутра, сойузлă çĕршывсен посолĕсем Франци миççине канашлăва пухăнсан, есĕр сата тапăнса кĕреттĕр те, сывлăшала пăшал персе: „Пĕттĕр Франци!", „Пĕттĕр Англи!", „Сывă пултăр Константин!"—тесе кăшкăраттăр".

Çавăн пек пулнă та. Çавăн пек „намăслантарни" Францинче пит хытă хускатса йанă тата Англин лăпкă тăракан обшчĕствăлă шухăшне шиклентернĕ. Грецин Франци правителствинчен çыру çырса каçару ыйтмала пулнă. Тепĕр так вăхăтран, чылай провокацисем тунă хыççăн, Грецире влаçа Венизелос йарса илнĕ те, вара Греци сойузниксен йенне тăнă.

Томсон кĕнекин вĕçĕ, автăрĕ ун пек шутламан пулсан та, пит нумайии çинчен калать. „Мирлĕ конференцинче,—тесе çырать вăл,—Венизелосăн урок туйанма лекрĕ, вăл урока унăн иртнĕ пурнăç историнчен ăнланмала пулнă, тĕллесех каластăк, пысăк çапăçусенче çĕнтерекенсем вĕсем чи малтанах реалиссем, вĕсен хăйсен вак-тĕвек сойузникĕсене усă тумали сентименталĕнăç валĕçи вырăн та йулмасть. Греци çарĕ нимĕн те тĕкĕнмен пекех тăрса йулнă. Венизелос мĕн те пулсан тытса илес шутпа çав çарпа усă курма шутланă. Украинăра болĕшевиксене хирĕç сойузниксем експедици тунă чухне телейсĕр сехетре вăл çар корпусĕ сĕннĕ. Сойузниксен експедицийĕ ăнăçсăр пĕтнĕ, унăн отрйачĕсене совет çарĕсем çĕмĕрсе тăкнă".

Аслă Совет Сойузĕ çине алă çĕклеме хăйакансене пурне те—шултра агрессăрсене те вĕтĕ-шакăр агрессăрсене те çавăн пек инкекех кĕтет. Мухтавлă сталинла нарком Н. И. Йежов йертсе пыракан совет разведки тунă çĕнтерÿ, Йапонипе Германин сыхтăмла-троцкисла шпионла бандине пĕр хĕрхенÿсĕр çĕмĕрсе тăкни—епĕр малашне те халĕхин пекех çĕнтерессине ĕнентерсе тăрать. Çитес вăхăтсенче те çĕнтерÿсем пирĕн алăра пуласси—ирсĕр шпионсемпе сутăнчăксенчен тасатнă пĕрлĕхлĕ хăватлă Хĕрлĕ Çарта.

Фашисла агрессăрсемпе вĕсен ылханлă сыхтăмла-троцкисла тарçисен ирсĕр хăтланăвĕсене хирĕç совет халăхĕ сталинла сыхăлăха вăйлатать, тата ытларах пĕтĕçет, тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр йуратать.

* Базиль Томсон. „Шпионаж во время войны". Соц. экгиз. 1938. Стр. 183. Цена 1 руб.

1938 çулхи çураки умĕн

ÇИТМЕНЛĔХСЕМ ПАЛĂРЧĔÇ

ТРАК. Итмар йалсоветĕнчи кĕрекен „Майăн 1-мĕшĕ“ тата „Автобус“ колхозсем кăçалхи йалхуçалăх ĕçĕсене большевикла иртерес тĕлĕшпе социалисăмла ăмăртăва тухнă. Хале ăмăрту договăрне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тухрĕç. Тĕрĕслесен икĕ колхозĕ те суракине хатĕрлесе çитменни курăнчĕ.

„Майăн 1-мĕшĕ“ колхозăн 3 тимĕр шăллă сÿре тумала пулнă пулсан, пĕр сÿре те туман. Плугсен, сÿресен туртисем, сÿсмен-пăйăвĕсем, кÿлмели хатĕрсем 11 лаша валли çитмеççĕ. Колхозра агрокружок организациленĕ. Анчах пĕр занйати те туса иртермен. Кружок руководителĕ Воротников йултăш ку ĕç çине саварăнса пăхман.

„Автобус“ колхозра та пит те пысăк çитменлĕхсем пур. Ампарта вăрлăхсем çине йур кĕрсе тулнă. Ку ĕнтĕ правлени председателĕ Кириллăв йултăш колхоз пурлăхĕ çине чунсăр пăхниччен килнĕ. Плугсем шыв айĕнче лараççĕ.

Лашасем икĕ колхозĕнче те начар.

Палăрнă çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать.

Р. Филиппăв.

Вăхăт кĕтмест

Хыркассинчи „Кульмет“ колхоз (Çĕрпÿ р.) суракине йапăх хатĕрленĕ пырать. Плугсене йусаман. Колхозăн вице çейалка, вĕсем пурте йусавлă мар.

Перремĕш бригадăн сÿре туртисем çителĕклĕ мар. Пăйăвсене йавман, валексем те çитмеççĕ. Бригадăсем вăйлă тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ăмăртса çĕлеме тытăнман.

Колхоз пăрçапа йасмăк вăрлăхĕсене ку таранччен те тасатса пĕтермен. Уйа тислĕк тата торф кăларма тытăнман та.

Вăхăт кĕтмест,—колхоза йертсе пыракансен халех хĕрÿлĕ ĕçе тытăнмала. Районри çĕреç пайĕнчен те колхоза пырса пăхмала.

А. Русанăв.

Лашасене вăйлă апат çине тăратнă

Çĕнйалти „Правда“ колхозăн (Трак р.) бригадисем çуракине мĕнле хатĕрленсе пынине тĕрĕслесе тухрĕç. Çуракине бригадăсем лайăх хатĕрленсе пыни курăнчĕ.

Колхозăн лашасем мăнтăр. Конйухсем лашасене çуракине вăйлă кăларассишĕн пĕр-перинпе ăмăртса çĕлеççĕ. Хале пур лашасене те вăйлă апат çине тăратнă. Кÿлмели таврашсем йусавлă.

Кашни колхозникĕн çуракинче хăйĕн хăш лашапа çĕлемелине пĕлсе тăрать. Колхоз правленийĕ çуракинче кашни колхозникĕн мĕн ĕç тумалине кăтартса списка туса çакнă.

С. Филиппăв.

Йединоличниксемпе ĕçлемен йалсовет

Шипулат йалсоветĕнчи (Вăрмар р.) колхозсем пурте çуракине хатĕрленсе çитрĕç. Вăрлăхсене уйăштарса суртласа хунă, йалхуçалăх машинисене йусанă, лашасене канма тăратнă.

Анчах йалсоветĕнчи йединоличник хуçалăхĕсем пĕри те суракине хатĕрленсе çитмен. Вăрлăхлăх тырăсене суртлама пуçăнман, сÿре çемçетмели вырăнти йалсене пухман. Йалсовет председателĕ Федотăв йултăш йединоличниксене çуракине хатĕрленес ĕçре тапăклăн йертсе пымаст.

П. Григорйĕв.

Çекцисене йертсе пымаççĕ

Мăн-Хăмăрна йалсоветĕнче (Хĕрлĕ Чутай р.) пĕтĕмпе 10 çекци. Вĕсенчен чылайăшĕ хăйсен ĕçне кирлĕ пек туса пымаççĕ. Çекци руководителĕсем нихăçан та çекци членĕсене пухса канашлусем иртермен. Йалсовет хăй те çекцисен ĕçне хаклamaст.

Уй-хир çекцинче малтан 12 çын пулнă. Хале 6 çын çеç. Анчах вĕсем те хăйсене ĕçре кăтартмаççĕ. Мăн-Хăмăрна йалсоветне кĕрекен колхозсем çуракине тивĕçлĕн хатĕрленмеççĕ. Вăрлăхсене тасатса çитермен, сÿре çемçетмĕн, минераллă çăнăхсене çителĕклĕн кÿрсе килмен, плугă-сÿре, хăмăт-ĕнерчĕк, шăналăксем, михĕсем, кутăк тата ытти хатĕрсем çителĕксĕр.

Апла пулин те, уйхир çекцийĕ колхозниксемпе йединоличниксене çуракине хатĕрленме пулăшмаст.

Культура çекцийĕ те хăйĕн ĕçĕ çинчен пачах манса кайнă. Хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем пĕтĕмпе 125 çын. Вĕсене пайанхи кун та вĕрентĕве хутшăнтарман. Çекци руководителĕ Кудрйавцĕв йул. хуйĕн членĕсене те пĕлмест. Çекци членĕсене çулталăк хушшинче те канашлăва пухман.

Çекцисен ĕçне халех вăйлатса йамала.

Й. Брызгалăв.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇРИ СПЕЦИАЛИССЕН КАНАШЛĂВĔ

Мартăн 29-мĕшĕнче Шăхасан районĕнчи вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалиссен, ферма пуçлăхĕсен, дойаркăсен, ферма ĕçĕнче ĕçлекенсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу районра вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вылăхсене чунтарса хăварас ĕçсем мĕнле пынине пăхса тухса, кирлĕ ĕçсем туса иртерме йышăнса хăварчĕ.

Ленинградри С. Орджоникидзе йачĕпе тăракан савăтра „И. Сталин“ йатлă хăватлă пăрсĕмĕрен тăваççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: „И. Сталин“ пăрсĕмĕрен строительстви.

Й. Халип фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Выдвиженĕцсен малтанхи утăмĕсем

1937—38 çулсенче Йĕпреç районĕн центрĕнче чылай выдвиженĕцсем ĕçлемĕ пуçларĕç. Вĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартса пыраççĕ.

Шипатăв йултăш 1937 çултанпа Йĕпреç райсутĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Вăл унччен Чурачăк йалĕнче 5 çул хушши туллимар вăтам шкул директорĕ пулнă.

Шипатăв йултăша малтан ĕçлеме йăвăр пулнă. Районра шкул çулне ситни çен 140 ача шкул тулашне тăрса йулнă. Шкулсене вĕрентме 30 учитĕл çитмен. Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе вăл çине тăрсах ĕçленĕ.

Районра пĕтĕмпе 24 вулав сурчĕ. Вулав сурчĕсем начар ĕçлеççĕ-ха. Унăн сăлтавĕ—йалсоветсем вулав сурчĕсем çине çителĕклĕ пăхниччĕ. Чылай вулав сурт пуçлăхĕсем ĕçуксĕн вăхăтра илеймест. Акă, Хирти Пăвашри вулав сурчĕн пуçлăхĕ Захарăн йултăш çентăр уйăхĕнчен вара ĕçуксĕн илеймест. Йалсовет председателĕ „укса сук-ха“ тенипех ирттерсе йарать. Епеç йалсоветĕ те вулав сурт пуçлăхне ĕçуксĕ вăхăтра парасси çине сăнăн пекех пăхать.

Вулав сурчĕсем валли уйăрнă районри бйуджет укçипе çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. 1937 çулта вăл бйуджетран 56 процент анчах усă курнă. Ку тĕлĕшпе районри сутĕç пайĕн пычлайах пысăк ĕçсем тумала-ха. Вулав сурчĕсен ĕçĕсене кăтартулă тăвассишĕн вăйа хурса кĕрешмеле.

Андрийанăвă йултăш ку таранччен Ентрийалĕнчи йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ. Хале иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ районри сывлăх пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Вăл киличчен сывлăх пайĕнче ĕçсынинсен жалабисем çине тивĕçлипе пăхман. Халĕ кунта жалабăсене вăхăтра тĕрĕслеççĕ. Андрийанăвă нумайĕшне вырăнсене тухса хăй тĕрĕслет. Халăхи вăхăтра районта ĕçсыниннсен сывлăхĕ сыхлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем пуçарса йанă. Буйинскинче пульница туса пăлăртнă. Сланец шахтинче медицина пункчĕ усаççĕ. Кунта сурттне те туса хунă, тухтăр та, акушерка та çак кунсенчех ĕçе тытăнаççĕ.

Г. МАРУШĔВ.

Хаçат-журнал сарасси—паха ĕç

Йĕпреç районĕ кăçал хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿ турĕ. Çак çулталăкăн пĕрремĕш кварталĕн планĕпе 50 пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журнал сармала пулнă пулсан, 60 пин тенкĕлĕх сарса, плана 120 процент тултарнă.

Районра 32 почтальйон. Вĕсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ, кашниннех ăмăрту договăрĕсем пур. Союзпечĕтĕн районри уйрăмĕ час-часах почтальйонсене пухса канашлусем иртерет.

Масса хушшинче хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен почтальйонсем районра сахал мар. Хумпуç Патăрйелĕнчи Афанасйĕв, Тури Клешкассинчи Васильйĕв йултăшсем уйрăмах палăрса тăраççĕ. Афанасйĕв йултăш тăрăшса ĕçленипе кашни килех хаçат илет. Хумпуç Патăрйелĕнчи кашни хуçалăх икшер екземпльар хаçат-журнал илсе тăрать. Афанасйĕв март уйăхĕнче апрел уйăхĕшĕн тата 280 тенкĕлĕх сарнă. Çурăки пынă вăхăтра лайăх ĕçленĕшĕн 50 тенкĕ парса премиленĕ.

Тури Клешкассинчи Г. Васильйĕв ултă ăмĕш çул ĕнтĕ почтальйонра ĕçлет. Вăл массăпа ĕçлеме пĕлет, вĕсем хушшинче хаçат-журнал сарма пултарать. Вăл йалăнах активпа тачă çыхăнса ĕçлет. Ана ĕçре вулав сурчĕн пуçлăхĕ Ухтанăв йултăш пулăшса пырать. Вулав суртне пыракансемпе час-часах калаçусем туса иртереççĕ, хаçат вуласа пăраççĕ.

Районра начар ĕçлекен почтальйонсем те пур-ха. Тусари Ф. Илйин иртнĕ çулта аван ĕçленĕччĕ, кăçалхи 2—3 уйăх хушшинче вăл пачах та ĕçleme пăрахрĕ. Март уйăхĕнче мĕн пурĕ те 50 тенкĕлĕх çеç хаçат-журнал сарнă.

Каймас Тусари Михайлăв та апрел уйăхĕшĕн 14 тенкĕлĕх çеç сарнă. Кийа йулнисен сывăх вăхăтрах малтисемпе танлашас пулать.

Союзпечĕтĕн районри уйрăмĕ çураки вăхăтĕнче хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерсе тăма çакăн пек ĕçсем туса иртерме палăртнă:

Çуракине тухиччен кашни колхоза, бригадăна, звенона валли хаçат сырăнтармала. Çураки пынă вăхăтра хаçатсене ĕленĕ çĕре уйа тухса памала. Кашни бригадăра витринăсем пулмала т. ыт. те. Сав ыйтусемпе апрел уйăхĕнче почтальйонсемпе сыхăну уйрăмĕнче ĕçлекенсен канашлăвĕ пулать.

Дм. Михайлăв.

Тăрăшса ĕçлекен почтальйон

Чăкăр йалсоветĕнчи (Шупашкар р-нĕ). К. Федăрăв почтальйон хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе районри почтальйонсенчен малти вырăна тухассăн тăрăшса ĕçлерĕ. Пайанхи куна вăл çÿрекен йалсенчи 250 хуçалăха пурĕ 600 екземпльар тĕрлĕрен хаçат-журналсем килсе тăраççĕ. Çырăнă хаçат-журналсене вăл подписчиксем патне вăхăтра çитерет.

Н. Васильйĕв.

2500 тенкĕлĕх

Канашри вакунсем йусакан савăтра ĕçлекен И. С. Фомин йултăш хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе тăвăттăмĕш çул ĕнтĕ уполномоченнăй пулса ĕçлет. Вăл кашни çулах лайăх ĕçленĕшĕн парнесем илет. Апрел уйăхĕнче Фомин йултăш 2500 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журналсем сарчĕ. Халĕ май уйăхĕшĕн подписка пухать.

Д. Иванов.

„Безбожник“ хаçата 120 екземпльар сарчĕç

Мартăн 30-мĕшĕнче Тракри вăтам шкул çумĕнче (Трак р.) учителсен партия историне вĕренмели кружокăн занйатийĕ пулчĕ. Занйати хыççăн парти райкомĕн çекретарĕ Закамский йултăш пупсен праçникĕн—мункунăн сийенĕ çинчен массăна ăнлантарасси çинчен каласа пачĕ. Учителсем йалсенчи турăçăрсен йачейкисене вăйлатма, тĕн сийенĕ çинчен калаçусем иртерме пулчĕç. Мартăн 31-мĕшĕнче „Безбожник“ хаçата колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче 120 екземпльар сарчĕç.

Ф. Долгова.

Райсутĕç пайĕ йăнăшсене тÿрлетет

Елĕк районĕнчи сутĕç пайĕ хăшпĕр тÿрĕ ĕçлекен учителсене елекçĕсем хыççăн кайса — халăх тăшманĕсем тесе ĕçрен кăларнă.

Йунтапари туллимар вăтам шкулта ĕçлекен Пугачов учителе елекпелипе, Алексейĕв учитĕле, „троцкист Павлăвпа çыхăну тытнă“ тесе, ĕçрен кăларнă. Сутĕç пайĕн пуçлăхĕ Антонăв йултăш ĕçе тĕрĕслес вырăнне, елеклĕ сăмахсене ĕненсе приказсем çырма йуратнă. Йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ учителсен районри канашлăвĕнче учителсен союзĕн районри комитет председателĕ Михайлăв йултăш Вырăс Сурăмĕнче ĕçлекен Соколова учительницă çинчен елеклĕ сăмах тухса каланă хыççăн, ăна „халăх тăшманĕпе çыхăну тытнăшăн“ тесе канашлуран кăларса йанă. Сутĕç пайĕн пуçлăхĕ вырăнĕнче ĕçленĕ Çергейĕв ĕçе тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех Соколова йултăша ĕçрен кăларнă.

Шемшерти вăтам шкулăн директорĕ пулса ĕçленĕ Сорокин йултăша та халăх тăшманĕпе çыхăну тытнă тесе ĕçрен кăларнă. Профорг пулса ĕçлекен Антонăв темиçе çул учитĕл ĕçĕнче ĕçленĕ Харитонăва йултăша „тăшманĕсене пулăшакан“ тесе союзран кăларттарнă. Харитонăв арăмĕн йăмăкне—Харитонăва йултăша Харитонăв хутне кĕрен тесе айăплама пăхнă.

Сутĕç пайĕнче ĕçлекенсем елекçĕсем хыççăн кайса приказсем анчах çырса ларнă, ĕçе тĕрĕслемен. Чăваш сутĕç халăх комиссариачĕ те ĕçрен кăларнă учителсене чĕнсе, илсе тĕрĕслемен.

Елĕк райсутĕç пайĕ халĕ йăнăшсене тÿрлетет. Ĕçрен кăларнă 18 учителрен 13-не ĕçе илнĕ.

К. Ошков.

Ф. КОЗЛОВ

красноармеец

Кавалерис йуратăвĕ

(Калав)

Кавалерис Гриша хăйĕн йуратнă лашине тасатрĕ, шăварчĕ, апат пачĕ. Гриша „Парижа“ пуçĕнчен ачашларĕ, çилхине тытса йакатрĕ. „Париж“ уна çине аслă куçĕсемпе пăхса илчĕ те, каллех кавлеме пуçларĕ.

Гришăпа „Париж“ — сывăх туссем. Икĕ çул ĕнтĕ Гриша ăна пăхать, унпала вĕренет, ăмăртусенче пулать. Гриша йуратать хăйĕн лашине, ăна йаланах таса тытать. Çулла шыва кĕртет, çăвать. „Париж“ та йуратать Гришăна. Вăл Гришăпа пĕрле ăмăртусенче пĕрре çеç мар мала тухнă. Ахаль мар ĕнтĕ Гришăна дивизинчи чи лайăх кавалерис йатне панă. Гришăна дивизи командирĕ çеç мар, округ командуйущийĕ, Совет Союзĕн маршалĕ Çемен Михайлăвич Буденнăй та паллать. Ворошилăв йултăш ăна хăй йатне çырнă сехет парса премиленĕ.

Гриша ескадрона кайрĕ. Вăл хăйĕн çинчи клинокне, винтовкине тасатрĕ, çиелти çи сÿрчĕ. Çĕнĕ гимнастеркине илчĕ, воротник çĕлерĕ, аттине тасатрĕ. Васкамасăр Ленин кĕтесĕне кĕрчĕ.

Ескадрон командирĕ аслă лейтенант Гришăна курчĕ те, хăй патне чĕнчĕ.

— Епĕ сирĕн валли отпуск билечĕ хатĕрлерĕм, кайма пултаратăр,—терĕ аслă лейтенант йăвашшăн кулса.

— Епĕ те хатĕр аслă лейтенант йултăш.

— Куратăн ĕнтĕ: маттур кавалерис лайăх тумлани мана килĕшет.

Аслă лейтенант Гришăна билет пачĕ. Гриша шорсене чăнкăртаттарса уйăрăлсă, шавлă Мускава, тухрĕ.

Вăл Мускав урамĕсем çине пăхса тăмарĕ, васкаса метро станцине кайрĕ. Çĕр айĕнчи пойăспа Сокольники культурăпа кану паркне тухрĕ.

Гриша пысăк та вăрăм çурта кĕчĕ. Кассăра билетшăн тÿлерĕ те, ташă залне кĕчĕ. Гриша çамрăксем çине пăхса илчĕ, вĕсем хушшинче хăйĕн йултăшне Çветлăна шырарĕ. Анчах тупаймарĕ ăна, килмен вăл пайан кунта.

Преподавательтĕ те килчĕ, пурте мăшăрланса урок пуçланасса кĕтсе тăраççĕ. Гриша Çветлăнăн хитре, çавраках пичĕсем çине, кусĕсем çине татах пăхрĕ.

— Кампа манăн ташлас вара?—шутласа илчĕ те вăл, кăмăлсăрланчĕ.

Тенкел çине ларас тесе, сылтăмала пăрăнчĕ. Унăн хура куçĕсем пĕр пĕчĕк тăракан хĕре курчĕç. Гриша кулса илчĕ, хĕр те кулчĕ. Гриша хĕр çине, унăн кăвак-кусĕсем çине, пичĕ çине, пурçăн платйи çине, туфли çине пăхса илчĕ.

— Паллашар, каларĕ Гриша Вальушин!

Хĕр Гришăна хăйĕн çемçе аллине пачĕ те, хуллен каларĕ:

— Мастăр Çветлăна Баранăвă, „Буревестник“ хапăркан.

Гриша Çветлăнăна аллисенчен хуллен тытрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те ташлама хатĕрленсе тăнă çамрăксем патне пырса тăчĕç.

Преподавательĕ ташăсен черетне урокĕ çинчен каласа пачĕ. Çветлăна итлет, ытти пĕлет, урисемпе пусса пăхать.

— Есĕр ăнлантăр-и, Гриша? — ыйтать вăл.

— Ăнланатăп.

Оркестр вылйама пуçларĕ. Залăра атăсемпе, туфлисемпе кăштăртаттарма пуçларĕç.

— Лайăх, сăмăл ташлатăр есĕр,—терĕ Çветлăна Гришăна.

— Есĕр те, — терĕ Гриша кăшт хĕрелсе.

Преподаватель те вĕсене мухтарĕ.

—Йăлах ташлаççĕ,—терĕ пурин умĕнче те.

Урок пĕтсен Гришăпа Çветлăна канмали залăна кайса ларчĕç. Халĕ вĕсем пĕр-пĕрне хăйсем çинчен, хăйсен пурнăçĕ çинчен каласа пачĕç.

Парка тухсассăн вĕсем аллейăсем тăрăх утса çÿрерĕç. Гриша Çветлăнăн хитре, çаврака пичĕсем çине, кусĕсем çине татах пăхрĕ.

— Тен, епĕ ăна йуратрăм та пулĕ. Мĕнле вăл аван, сасси унăн шăнкăлтан пек. Чăнах та çаплах пулĕ. Йуратрăм вĕт епĕ ăна, терĕ вăл хăй ăшĕнче.

Ун çинчен, хăйĕн шухăшĕсем çинчен Çветлăнăна каласа парасшăн пулнă вăл. Вăл акă йуратать хăйĕн „Парижне“, йуратать вăл хăйĕн йултăшĕсене, дивизине, Хĕрлĕ Çара, тăван çĕршыва. Анчах Çветлăнăна та йуратать. Гриша наркома пана сехете, ылтăн сехете йуратнă пек йуратать ăна.

Гриша лайăх кавалерис, унăн клинокĕ йозăна çивĕч касать. Ăна мухтаççĕ, премилеççĕ. Кĕркунне вăл смĕрĕхсен çар службине йулма шутлать. Унăн пурте пур, унăн пурте çителĕклĕ. Çавăн пек шутланă вăл пайанччен. А халĕ ăна темскер, тем çитмен пек туйăннă. Унăн чĕрине çав çитмен пек туйăнни пайан. Мĕн вăл? Çветлана, йăнаш лăпкă чĕре, çывăх йултăш, унăн шăнкăр сасси, унăн кусĕсем, вичĕсем. Çветлăна кирлĕ пулнă Гришăна.

— Анчах мĕн шутлать-ши Çветлăна? Йуратать-ши вăл мана?

Çветлăна сахал калаçнă, Гриша калаçнине нумайрах итленĕ. Анчах Гриша пайăн çăварĕнчен тухакан сăмахсене мĕн вăл, пусĕнчи, чĕрери сăмахсене каласшăн пулнă. Анчах... Вăл хăйаймăн...

Кашни канмали кун вĕсем Сокольникинче тĕл пулнă. Урок пĕтсен, вĕсем паркра уçăлса çÿренĕ.

Пайан акă ташăсен йулашки урокĕ пулчĕ. Гришăпа Çветлăнăна преподавательĕ каллех мухтарĕ. Вĕсем иккĕшĕ те сăвăнса преподаватель аллине хытă чăмăртарĕç.

— Есĕр мăшăрланмарăр-и? Епĕ сире пĕрмай пĕрле куратăп,—ыйтрĕ вăл Çветлăнаран.

Çветлăна хĕрелсе кайрĕ, Гриша кăшт кулчĕ. Анчах пĕри те пĕр сăмах хушмарĕ.

Çветлăна Гришăна хăйĕн хваттерне чĕнчĕ. Вĕсем трамвайпа Мускавăн пысăк урамĕсемпе кайрĕç. Унта пысăк çурт умĕнче чарăнчĕç те, виççĕмĕш хута хăпарчĕç.

Çветлăна Гришăна хăйĕн хваттерне илсе кĕчĕ. Илемлĕ хваттер. Стенасем çинче—чечексем, картинăсем, сулпуçсен çăнĕсем, укравина тĕррисем.

— Сирĕн хваттер аван вара,—терĕ Гриша.

Çветлăна гитарă çинче выляр. Гриша итлет. Унтан Гриша выляр. Çветлăна вăл вăхăтра патефона майлаштарчĕ, вĕсем иккĕш Ольга Васильйĕвна йурланинче, Александрăв профессăр ансамблĕ йурланине итлерĕç.

— Ку хваттере мана лайăх ĕçленĕшĕн пачĕç, Гриша. Манăн рабочисем ĕç нормине пĕрмай тултарса пыраççĕ. Ман мăстăра—хваттер, рабочисене—укçа, канмали çурта кайма путйовкăсем пачĕç премилерĕç.

Гриша Çветлăнă çумнерех ларнă. Вăл кăсăнинчен сехетне кăларса, пĕрремĕш хут Çветлăна умĕнче вăхăт пăхнă.

— Гриша, мĕшлĕ сехет вара ку санăн?—Ылтăн вĕт ку-! Кам пачĕ сана?

— Тытса пăх, вара пĕлĕн.

Çветлăна сехете алла илнĕ, вăл ăна çавăра-çавăра пăхнă. Вăл Гриша йатне вуланă, хĕрелнĕ.

— Гриша, а Гриша! Нарком парнинĕ ку! Мĕншĕн есĕ мана каламан ун çинчен?

— Гриша чĕнмен, вăл хăйĕн йуратнă хĕрĕ саванăнине пăхса тăнă.

— Гриша, есĕ Ворошилăва та, Сталина та курнă пулĕ?

— Ворошилăва курнă. Кремльте. Сталина парад вăхăтĕнче курнă.

Гриша татах калать. Çветлăна итлет. Икĕ çамрăкăн чĕрисем васкаса тапнă. Икĕ çамрăк чĕрисем тĕлĕйе, савăнăç йурăсем йурланă.

Гриша Çветлăнăна майĕпенчен хуллен ыталарĕ. Чĕри питĕнчен, тутинчен чуптурĕ. Унăн чĕри васкаса тапнине Çветлăна сисрĕ. Гриша Çветлăнăн чĕри тапнине итлесе, ун çине йăвашшăн пăхрĕ.

Çветлăна Гришăна ыталаса илчĕ те, такам курасран хăранă пек васкаса чуптурĕ.

Гриша çак минутсенче чи телейлĕ, чи саванăçлă çын пек туйса илчĕ. Çветлăна та телейлĕ пулнă. Вăл йуратнă качча—маттур, çивĕч кавалерис.

— Йурататни мана Çветлăна?—ыйтнă Гриша.

— Йурататăп, савап, Гриша!

Патефон йурланă, радио музыка панă. Çак пĕтĕм йурăсем, çак артиссем вĕсемшĕн, икĕ çамрăк çыншăн пекех пулнă.

⁂

Ернерен Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарас умĕн Гриша Çветлăнăн тухĕ пулнă. Туйа ескадрон командирĕ, Гриша йултăшĕсем, тăванĕсем тата Çветлăнăн хапăркри йултăшĕсем, савăт директорĕ пынă. Хапрăк клубĕнче музыка вĕсемпе саванăçлă кĕвĕсем выльанă.

Малтан хĕрлĕ сăмахсем каланă. Унтан ташăсем пуçланнă. Гришăпа Çветлăна, тухĕ çыннисем вĕсем малтанхи мелле лайăх ташланипе пăхса тĕлĕннĕ. Нумайĕшĕ пĕлмен Гришăпа Çветлăна ташă урокĕсене çÿренине, унта паллашнине, йуратнине. Çветлăнăпа Гришăшăн кусем халăлă пулнă. Вĕсем çак кассăсем çинчен халĕ те савăнса каласа хĕпĕртенĕ.

Политрук туйа кайаракаса çитрĕ. Ăна курсан, Гриша хăнасене сĕтел хушшине лартма сĕнчĕ. Хăнасем ларнă:

— Гриша, сăмах калас тесе, ура çине тăнă. Политрук аллипе сулнă та, Гришăна ларма хушнă.

— Политрук сăмах калать.

— Пайан,—тенĕ вăл,—епĕр çамрăк кавалериса, пирĕн тăван çĕршыв ывăлне, çамрăк çекĕсем ленина сойузне члене алантаратпăр. Епĕр Гришăна Çветлăнăна пурнăç путйовине паратпăр. Вăл путйовкă—телейлĕ, савăнăçлă путйовкă. Гриша пирĕн полкра смĕрĕхсен йулать. Ăна кĕçĕн политрук тăватпăр. Çветлăна—хапăрка, вăл епĕр шефа илне хапрăкăн чи лайăх стаханавки.

Полк командирĕ сире çакна калама ыйтрĕ. Вăл Гришăна вунă кунлăх отпуск парать...

Зала кĕрлесе кайрĕ.

Савăт директорĕ сăмах илчĕ. Вăл Çветлăна икĕ ернелĕх отпуск пани çинчен каларĕ.

Пулашкинчен Гришăн йалĕнчи йултăшĕ Вальа килнĕ.

— Пирĕн „Чапайĕв“ колхоз членĕсем Гришăна Вальушина йуратаççĕ. Вăл Хĕрлĕ Çара киличчен пирĕн колхоз председателĕ пулнă.

Гриша тетех пирĕн патра ĕçлĕмĕ, анчах Хĕрлĕ Çар — пирĕн çар. Хĕрлĕ Çара епĕр Гриша пек паттăрсене вунтар, сĕршер пама пултаратпăр.

— Кайатпăр-и пирĕн республикăне?—ыйтрĕ Гриша Çветлăнăран.

— Кайатпăр...—Есĕр, хаклă йултăшсем,—терĕ вăл,—манăн чĕрене хускатăр. Епĕр мана чис тунăшăн хĕпĕртетĕп. Манăн атте-анне çук. Атте граждăн вăрçинче, Перекопра вилнĕ. Анне вăсĕх çуле вилнĕ. Анчах епĕ тăлăх мар. Мана Совет влаçĕ пăхса ÿстерешĕн савăнатăп, хамăрăн тăван çĕршыва мухтатăп. Кирлĕ пулсан, тăшман пирĕн çине тапăнсан, Гришăпа пĕрле, пĕр ескадронрах, тăшмана вăрçма кайатăп. Тăван çĕршыва епĕ Гришăпа йуратнă пекех йуратăп!

Музыка каллех выльама пуçларĕ. Туй, саванăçлă туй пырать...

Испани халӑхӗ интенрвентсене отпор пама хатӗрленет

Паттӑр Испани халӑхӗ фашиссене тата Италипе Германи интервенчӗсене отпор пама хӑйӗн вӑйне халӑма çук пысӑккӑн мобилизацилет. Республикӑла Испани халӑхӗ Испани çӗрӗ çинче фашисла варварствӑна çӗнтерме парас мар тесе кирек мӗнле йӑварлӑха та тӳсме хатӗр.

Çирӗм пин çамрӑк Испанин халӑх çарне добровольцсем пулса çырӑннӑ ӗнтӗ. Добровольцсем пухас тӗлӗшпе провинцисемпе хуласем пӗр-пӗринпе ӑмӑртаççӗ. Пӗрлешӳлӗ социалисла çамрӑксен ӗçтӑвкомӗ: кирлӗ пулсан, вӑл виççӗмӗшпе таватамӗш дивизисене те парать, тесе пӗлтерет.

Партисемпе организацисем çӗр пин добровольцӑ пама пулса çирӗппӗн шантарнӑ. Республикӑлӑ Испанире партисенче йе организацисенче тӑман çынсем урӑх çук та темеле. Çавӑнпа та çакӑн пек çамах пани вӑл—массӑсем панӑ çамах пулса тӑрать.

**

Испанин Бегнигуасил йатлӑ пӗчӗк йалӗн хресченӗсем çакӑн пек постановлени йышӑннӑ: хӗвел тухнӑ чух тӑрас та хӗвел аначченех ӗçлес, пӗтӗм халӑха мобилизацилес, республика вӑйӗн сывлӑхлӑ апатсӑмӗç хатӗрлесе парас.

Çак вӑл—епӗр тӑшмансене çапни пулать,—тесçӗ хресченсем.

Кайала чакнӑ чухне хресченсем боецсемпе пӗрлешсе кайаççӗ. Вӗсем винтовкӑсене пуçтараççӗ тата вилнӗ боецсен вырӑнне стройа тӑраççӗ. Командирсем, боецсене шутласа тухсан, çынсем чакнине туймаççӗ.

**

Кастельйонра хаҫ çеç госпитальсенчен тухнӑ инвалид боецсем социалисла çамрӑксен вырӑнти организацине пынӑ та, хӑйсене çамрӑксене çар ӗçне вӗрентекен инструктӑрсем пулса ӗçлеме йама ыйтнӑ.

**

Тӗлӗнмелле лайӑх Испани халӑхӗ чӗрӗ, вӑл вӗçне çитиех çапăçать. „Испани вӑл Австри мар,—тесçӗ вӗсем мӑнкӑмӑллӑн.—Черкуçланса пурӑниччен ура çинче тӑрса вилес“.

Испанецсем йулашки çын йулмиччен çапăçӗç. Вӗсем хӑйсене халӑх фрончӗн правительствӑ аллине параççӗ. Вӗсем правительствӑ хыççӑн пыма хатӗр. Вӗсем хӑйсене хӗçпӑшалланатарма тата йертсе пыма çеç ыйтаççӗ. Вӗсен аллисем çирӗп, çав алла хӗçпӑшал тыттарсан, вӗсем нимӗне пӑмасӑрах çӗнтерӗççӗ.

(ТАСС).

Пӗтӗм вӑйа—Испани халӑхӗн ирӗклӗхне хӳтлеме

Испани халӑхӗ пӗтӗм вӑйа фронта республикӑна хӳтлеме мӗн пурӑнсаҫсене çапса çӗмӗрме мобилизацилет. Пӗрлешӳлӗ социалисла çамрӑксен федерацийӗ добровольцсенчен иккӗмӗш дивизи организацилессипе халӑма çук пысӑк анӑçлӑхпа пырать. Çак икӗ дивизи тунипех лапланса лармаççӗ, чухлӗ кирлӗ, çавӑн чухлӗ добровольцӑ йама йышӑннӑ.

Йӗркеленекен дивизин ретӗнче тӑнӑ добровольцсем хушшинче Традос поет тата илемлӗ искусства департаменчӗн директӑрӗ Ренау пур.

(ТАСС).

АМӐШӖ

Шанси провинцинчи пӗр йалта сӗбр Пиндинче райончӗн горньак-партизансемпе тӗл пултӑмӑр. Хӗлхен илемлӗ кун йӑлле айенче ларса, икӗ горньакла ларӑмӑр. Весемчен пӗри — 31 çулти Ван Фын-шань — партизансен отрйатне командирӗ пулса тӗтелӗ. Хаҫ çеç çапăçурат таврӑннӑскер, чӗлӗмне турта-турта ... калать.

Ван Фын-шань—Хебей çынни. Вӗсен пӗтӗм уйӗсене йапонецсем çаратса çӗмӗрнӗ. Ван Фын-шаньӑн çемйинчен йулни—пичӗшӗпе амӑшӗ—халӗ вӗсемпе партизансемпе пӗрле пӗрапаççӗ.

Вӑл калаçнӑ пани мана питӗ тӗлӗнтерет, епӗ вара Ван Фын-шаньӑн мана амӑшӗпе паллаштарма ыйтрӑм.

Курнунрах ватӑ хӗрӑрӑм мана хапӑл тусах йышӑнчӗ, хӑй çумне ларма хушрӗ. Вӑл 61 çулта пулин те унӑн сӑнӗ çамрӑк пек курӑнать. Ӗлӗкхи йӗрке тӑрӑх унӑн урине кӑлӑпланӑ пулнӑ. Ешӗ унӑн урине пӑхса шухӑша карӑм, апа партизансемпе пӗрле çӳрт-çӳресем урӑй ҫӳре йывӑр пулмала.

Унтан ыйтатӑп.

— Сирӗн ачӑл ывӑл—партизан. Епӗ сирӗн кӗçӗн ывӑл хӑй ирӗкӗпе партизансен отрйадне кайнӑ тенине те илтнӗччӗ. Мӗнле-ха есӗр вилӗмрен те хӑрамастӑр?

— Çапла, епӗ вилӗмрен хӑраматӑп. Йапони аррунйӗсемпе кӗрешмесен, пирӗн пурпӗр пӗтет.

— Мӗншӗн-ха есӗр йапонецсене кураймастӑр?

— Мӗншӗн? Йапонецсем манӑн килсурта çунтарса йачӗç, йулашки сысмана, чӑхха пусса çирӗç. Манӑн урӑх нимӗн те йулмарӗ. Çитменни çине ытти продуктӑсене те çунтарса йачӗç. Çакӑн хыççӑн епӗ хамӑн кӗçӗн ывӑла çара кайса йапонецсемпе кӗрешме хушрӑм. Епӗ ывӑла çапла каласа йатӑм: есӗр мана йапонецсене Китайран хӑваласа йарсан çеç кирлӗ пулатӑр, терӗм.

Халӗ çак ватӑ хӗрарӑм отрйадри пӗтӗм партизансен йурати амӑшӗ пулса тӑрать. Партизансен отрйачӗ ӑçта та пулин пӗр авалрах выртӑ чарӑнсан, вӑл партизансенчен çӑлкке... тумтирӗсене сапласа парать. Ача пуртне йуратаççӗ, анне тесе чӗнеççӗ. Вӑл, хӑйӗн пӗчӗк урине пӑхмасӑрах, партизансемпе пӗрле пысӑк çӑрт-тусем урлӑ каçса пырать. Хӑйӗн вӑйӗ çитнӗ таран çапӑçура Китай халӑхӗн ирӗклӗхӗшӗн кӗрешме пулӑшать.

(„Чайна Тудэй“ журнал).

Ялхуçалӑх ертелӗн уставне пӑсаççӗ

Караганда облаçӗнчи (Казахстан) хашнер колхозсем йалхуçалӑх ертелӗн уставне пӑсаççӗ. Вичӗ колхозра çулталӑк хушшинче председательсем 4—5 хут улшӑннӑ, тата чылай чухне вӗсене колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗсӗр суйлаççӗ.

Колхозсем пӗр-пӗринчен çӗр ӳтӑ çулмали улӑх-çарансем т. ыт. çутӑн илнине палӑртнӑ. Колхозсенче хаҫ те колхозниксене пасма çӗр участокӗсем çирӗплетсе памаççӗ.

(ТАСС).

Совет Союзӗ тӑрӑх

●● Ленинградри Кировский савӑтра „Кировец-4“ маркӑла суха çухалмали тусеницӑла тракторӑн малтанхи вичӗ образеци пухса çитерне. Çӗнӗ трактора пур çӗрте те çӳрекен машинӑ конструкцийӗ тӑрӑх туна. Унӑн вӑй-хавачӗ пысӑк. Вӑл трактӑра çӗрмамӑк уйхирӗсенче тата лачакалӑ вырӑнсенче ӗçлеме туна.

●● Анат Атӑлта Астрахаҫрен пусласа Сталинграда çитиччен шыв çулӗ уçӑлнӑ. Апрелӗн 1-мӗшӗнче Астраханьрен вӑтӑр суднӑна йӑхан нефт тийесе тухнӑ.

●● Свердлӑвск облаçӗнчи колхозсене çуракн вӑхӑтӗнче 1.200 станционарла ача йаслисемсӗр пусне вӑхӑтлӑх уçнӑ 4.500 ача йаслисем ӗçлемеле. Вӑл йаслисенче 102 пин ача пулать.

(ТАСС).



Астраханьрен Сталинграда кайма пӗрремӗш нефтенаравиан ваҫӗн çул уçма Атӑл тӑрӑх çулеле „Финн“ тата „Мопровец“ баркассен експедицийӗ тухнӑ. Баркассене капитан-орденоносец Н. Н. Чадайӗв йертсе пырать. Пӑрахутсем Сталинград патнелле 15 сантиметр хулӑмӗш пӑра çӗмӗрсе пыраççӗ.

Ӳкерчӗк çинче: „Мархлевский“ баркас Сталин йачӗпе тӑракан савӑт затончӗнчен „Бурйата“ илсе тухать.

К. Борисӑв фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çумӗнчи искусствӑ ӗçӗсен Комитетӗнче

1938 çулта туллиметражла илемлӗ кинокартинӑсем калармали тематика планӗ çинчен

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çумӗнчи искусствӑ ӗçӗсен Комитечӗ 1938 çулта туллиметражла илемлӗ кинокартинӑсем калармали тематикӑ планне çирӗплетнӗ.

Тематикӑ планӗпе ӳкерме палӑртнӑ картинӑсемсӗр пуçне, хаҫхи вӑхӑтра ӳкерме пуçланӑ çак картинӑсене ӳкерсе пӗтерме йышӑннӑ: „Профессор Мамлок“, „Бакинцы“, „Зангезур“, „Часть“, „Вальтер“ тата „Победа“.

Кинематографи ӗçӗсен Комитечӗ кӑçалхи ийулӗн 1-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр çак темӑсем тӑрӑх хушса тематика планӗ хатӗрлеме йышӑннӑ: оборонӑ, Хӗрлӗ Çар пурнӑçӗ, тинӗс-çар флочӗ тата пограничниксем, фашисӑма хирӗç кӗрешесси, пӗтӗм тӗнчери фашисӑм агентурипе кӗрешесси, стахановла йухӑм, социализм строительствин хулара тата йалта, социализм строителсем союзла тата автономлӑ республикӑсене, халӑхсен туслӑхӗ, етнографи темисем тӑрӑх, хӗрарӑм çинчен, çемье çинчен, спорт темисем тӑрӑх, комедилӗ жанрсем тӑрӑх т. ыт те.

Кинокартинӑсене 1939 çулта производствӑран план тӑрӑх йӗркелӗ каларса тӑрас тесе, августӑн 1-мӗш тӗлне 1939 çулта кинокартинӑсем ӳкермелӗ тематика планӗ хатӗрлеме йышӑнна, уйрӑммӑн илсен, çакӑн пек историлӗ-революцилӗ темӑсем (сценарисем) хатӗрлемелӗ: „Свердлов“. Фрунзе“, „Дзержинский“, „Киров“, „Куйбышев“ тата, Серго Орджоникидзе“.

Кинематографи ӗçӗсен Комитечӗ çулте асӑннӑ темӑсем тӑрӑх литература сценарисен конкурсне тумали условисене пӗр уйӑх хушшинче хатӗрлеме йышӑннӑ, чи лайӑх произведенисен автӑрӗсене премипараççӗ.

Конкурс жюрине ССР Союзӗнчи паллӑ писательсене, режиссӗрсене хутшӑнтарма палӑртнӑ.

(ТАСС).

Полӑрти театр йубилейӗ

ИГАРКӐ, апрелӗн 4-мӗш, (ТАСС) Игаркари полӑрти театр апрелӗн 5-мӗшӗнче пӗр çул тултарать. Çулталӑк хушшинче театр 174 спектакҫ лартнӑ, вӑл спектакҫсене 70 пин çын ытла пырса курнӑ. Полӑрти театр сцени çинче Пушкин, Шекспир, Островский, Бальзак, Толстой, Мольер, Горький классиксен произведенийӗсене тата хаҫхи драматургсен чылай пйесисене вылясса панӑ.

Хӑйӗн йубилейне театр Шекспирӑн „Виндзорские проказницы“ йатлӑ комедине выляса парса паллӑ тӑвать.

Тутар республикинчи йалхуçалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗ

ХУСАН. (Телеграфпа, хамӑр корр.) Мартӑн 3-мӗшӗнче Хӗрлӗ Çар çурчӗн Колоннӑй залӗнче колхозсенчи, совхозсенчи тата МТСсенчи малта пыракансен республикӑри канашлӑвӗ уçӑлчӗ. Тутар республикин Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ Тынчерӑв йулташ канашлӑва уçнӑ чухне кӗске сӑмах каларӗ.

Канашлӑва Чӑваш тата Мордва республикисенчен делегатсем килнӗ. Канашлура социалисӑмла обйазательствӑсене сӳтсе-йаваççӗ, Мордва, Чӑваш тата Тутар республикисем хушшинчи ӑмӑрту договӑрне йышӑнаççӗ.

Тутар АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссарӗ—ССР Союзӗн Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Абсалӑмӑв йулташ канашлу делегачӗсене иртнӗ çулхи йалхуçалӑх ӗçӗн итогӗсем çинчен, çуракине хатӗрленесси çинчен, тата кӑçалхи задачӑсем çинчен каласа пачӗ.

Канашлӑван кӑсхи ларӑвӗнче прени пуçланчӗ. Чӑваш АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссарӗ—ССР Союзӗн Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Коротков тата Мордва республикин Çӗрӗç Халӑх Комиссарӗ—ССР Союзӗн Верховнӑй Совет депутачӗ Кулаков йулташсем прение тухса сӑмах каларӗç.

Канашлӑва 500 делегат ытла килнӗ.

М. Костин.

Г. Тимофейӗв.

Драмкружок ӳссе пырать

Шӑхасан районӗ. Мӑтшу йалӗнчи вулав çурчӗ çумӗнчи драмкружокра—18 член. Драмкружок кӑçалхи çул питтӗ аван ӗçлет. Пуман пулмасть вӑл Осипӑвӑн „Айдар“ пйесине выляса пачӗ. Спектакҫ курма пынӑ çынсене питӗ килӗшрӗ.

Кунсӑр пуçне кӑçал кружок „Аписсӑ“, „Тухатмӑш“, „Тупа“, „Усал ес тунӑ çын“, „Ӗçех çӗнтерет“, „Сутра“ пйесӗсене лартса пачӗ. Драмкружока Герасимӑвна Макарӑв йулташсем йертсе пыраççӗ. Вӗсем тӑрӑшнипе халӗ М. Горький „Тӗпӗнче“ йатлӑ пйесине лартса пама хатӗрленеççӗ.

Вас. Веселов.

„К сведению“ папкӑ ӑшӗнче

Пирӗн районри учреждениссемпе организацисем вырӑнсенче колхозсене мӗнле йертсе пыни çинчен ыйтса пӗлес килчӗ,—колхозсене пулаççӗ-и, мӗнле кӑтартусем пыраççӗ?

Ку ыйтупа колхоза кайса килмелле пулчӗ. Колхоз председателӗпе тата колхозри бригадирсемпе каласрӑмӑр.

— Мӗн калаçмали пур. Ака, тытӑр та, районтан йарса панӑ кӑтартусене вулӑр,—терӗ Шаккалти (Шупашкар р.) „Броневик“ колхоз председателӗ Д. Петров йулташ.

Шкапран „К сведению“ тенӗ паппкӑна кӑларса пачӗ.

— Вулӑр. Районтан панӑ пӗтӗм пулашу çакӑнта кураса тӑрать...

Епӗр Шупашкар районӗнчи çӗрӗç пайӗ тата Хатӗрлевсен Халӑх Комиссариачӗн уполномоченнӑйӗ колхозсене йанӑ хутсене вулама пуçлатпӑр.

„Предупреждаем, что по отношению... будут приняты меры вплоть привлечения к ответственности“.

Анланмала мар кӑна. Тен, райçӗрӗç пайӗ колхоз председательне пӗр-пӗр темӗнле ӗçшӗн ответа тӑрататсшӑн пулмалӑ? Çакӑнтан колхоз председателӗ айаплӑ çын пулӗ тетӗн.

Малла вулатпӑр:

„Предупреждаем, что по отношению бездействующих предколхозов, срывающих отклоняющихся будут приняты строгие меры“.

Татах:

„Привлегаю(?!) к ответственности“.

Йулашкинчен:

„Будет приняты отдельным работникам самые суровые меры вплоть до предании суду“.

Çакӑн хыççӑн, колхоз председателӗн „К сведению“ тенӗ паппкине пӑхса тухсан, вӑл хутсем хушшинче районти организацисем пӗр-пӗр пысӑк пулӑшу кӑлӑк пурри курӑнчӗ. Акӑ мӗн вӑл: вӗсем колхоз председателӗсене хӑш статйасене айапласшӑн кӑтартса памасӑр. Çавӑн кӑтартса парсан, колхоз председателӗсем умне пӗр „уçӑ картина“ тухса тӑмала.

Каламала, кун пек хутсем пӗртен-пӗр колхоз председателӗ патне кӑна мар, районӑри пур колхозсене те пыраççӗ. Кашни колхоз председателӗ, районтан йанӑ хутсем çине пӑхсан, пайан-ыран суд умне тӑмала пек курӑнать.

Шупашкар районӗнчи çӗрӗç пайӗпе Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн уполномоченнӑйӗ районри колхозсене кӑтартса пани тата пулӑшу пани пӗр те çакӑнта пулать.

Апла мар, хӑйсен, районтан йала, колхоза тухасчӗ.

Ив. Моççейӗв.

Ӗççынниссене кино кӑтартас ӗçе тӗпренех лайӑхлатмала

Совет кинематографийӗ творчестӑв тӗлӗшӗнчен пысӑк çӗнтерӳсем турӗ. „Броненосец Потемкин“, „Чапайӗв“, „Мы из Кронштадта“ картинӑсем пӗтӗм тӗнчипе çӗнтерӳлӗн, пысӑк хавасланӑхпа иртрӗç, ку картинӑсем пӗтӗм тӗнчери кинематографи ӳсӗмӗнче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраççӗ, вӗсем социализм тапхӑр искусствӑна чечекленетерсе ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк çитӗнӳсем пурӑнине кӑтартса пачӗç.

Йулашки вӑхӑтсенче совет кинематографин маçтӑрӗсем „Ленин в Октябре“, „Петр Первый“, „Богатая невеста“, „Балтийцы“, „Волочаевские дни“ тата ытти паха фильмсем те туса каларчӗç. Çак пысӑк çитӗнӳсем партипе правительствӑ тата Сталин йулташ кулленех тӑрӑшса пулӑшса пынипе пулма пултарчӗç.

Кино—социализм искусстви, асла совет халӑхӗн искусстви, вӑл большевиксен партийӗ йертсе пынипе хавӑрт ӳссе, çаралса пырать. Ку çӗнтерӳсене халӑх тӑшманӗсем, сӑтӑрçӑсем совет кино ӳсӗмне арҫатасшӑн тем тӗрлӗ майсемпе те тӑрӑшнӑ пулсан та, вӗсене татӑклӑн çӗмӗрсе пынипе турӗ.

Кинофикаци ӗçӗнче пирӗн республикӑра та паллӑ ӳсӗмсем пулчӗç. Ик-виç çул каярах 10 райондӑ çеç сасла кино пулнӑ пулсан, кӑçалхи çул район центрӗсенче пурне те сасла кино-установкӑсем пулаççӗ (Патӑрйел, Шӑнкӑртам, Ишлей, Турхан, Трак тата ыт. те). Республикӑра сасӑсӑр кинопередвижкӑсем 78 пур. 1937 çулта 16.700 сеанс тунӑ, кинокартинӑсене пӗтӗмпе 1.359.902 çын курнӑ. Шупашкарти кинотеатра „Ленин в Октябре“ картинӑна курма 18.893 çын пынӑ, „Петр Первый“ фильма курма 12.890 çын, „Пугачев“ фильма—12.466 çын, „Волочаевские дни“ фильма 9.143 çын пырса курнӑ.

Апла пулин те республикӑри кинофикаци ӗçе çӗршыва хӑвӑрт ӳссе пыракан культура ыйтӑвӗсенчен йулса пырать. Чӑвашкинотрест 1937 çулта та, кӑçал та пачах çитӗлӗксӗр ӗçлет.

Нумай пулмасть тӑрӑ шыв çине каларнӑ, кинематографи органӗсене кӗрсе ларнӑ халӑх тӑшманӗсем пирӗн республикӑри кинофикаци ӗçӗнче те çаксаӑ мар сӑтӑрла ӗçсем тунӑ.

Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ 1937 çулта тума йышӑннӑ ӗçсем, сӑмахран, Çӗмӗрлере кинотеатр тӑвасси, Шупашкарти саслӑ кинотеатра тӗпрен йусасси — Чӑвашкинотрестӑн кивӗ руководствин айапӗпе пурнӑçа кӗмен. Ку ӗçсене тума панӑ укçасем уçӑ курмасӑрах йулнӑ. Саслӑ кинопередвижкӑсем 15 тӑвас вырӑнне 4 çеç тунӑ. Патӑрйел, Шӑнкӑртам, Кувакинӑ район центрӗсенче саслӑ киноустановкӑсене пӗлтӗр туса пӗтермеле пулнӑ пулсан, кӑçалхи çулччен тӑсӑлса пырать. Финанс планӗ тата картинӑсемпе усӑ курас план 1937 çулта пурнӑçа кӗмен. Халӑха кинокартинӑсем кӑтартас плана 72,3 процент, билетсем сутса илес укçа планне 77,4 процент çеç тултарнӑ, весенчен: хуласенчи театрсем 93,3 процент, йалсенчи саслӑ кинотеатрсем 71,6 процент, саслӑ передвижкӑсем 45 процент тултарнӑ. Çапла йалсенчи кинотеатрсемпе передвижкӑсем 65,300 тенкӗ убыткӑ тунӑ. Чӑвашкинотрест 1937 çулта пӗтӗмпе 7.759 тенкӗ убыткӑ тӳснӗ. Растратӑсен шучӗ те пысӑк, пӗлтӗрхи çул 20.764 тенкӗ растрата пулнӑ.

Киномеханиксен киноаппаратсене тирпейлӗ тытмаççӗ. 1938 çулхи пӗрремӗш квартӑлта 78 сасӑсӑр передвижкӑсенчен 41 аппарат йусавра пулнӑ. Кинотеатрсенче таçалӑхха йӗркелӗхе тытса тӑрас тата техника правилисене пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе çитӗнлӗх ӗçлемеççӗ. Уйрӑмӑнах Патӑрйел, Йелчӗк, Шамаршӑ районӗсенчи кинотеатрсенче йапӑх.

Киномеханиксемпе кино работникӗсем çитмеççӗ. Вӗсене тӑташах хатӗрлес тӗлӗшпе çитӗнлӗх ӗçлемен. Çӗрпӳ, Трак тата Ишлей районӗсенче киномеханиксем çук пирки чылай передвижкӑсем ӗçлемеççӗ.

Фильмсем тавра культурӑлӑ-массӑлӑ ӗçе йапӑх организацилерӗç. Çавӑнпа та сасӑсӑр передвижкӑсем кӑтартакан кинокартинӑсене йалсенче сахал çӳреççӗ. Сӑмахран, Канаш районӗ сасӑсӑр кинопередвижкӑсен планне 21,7 процент çеç тултарнӑ, Вӑрнар—26,1 процент, Йепреç—25 процент тултарнӑ, тата ыт. те.

Кино ӗçӗ малашне те çакӑн пек йулма пултараймасть. Чӑваш республикинчи пур кино работникӗсен те халӑх тӑшманӗсен сӑтӑрлӑ ӗçӗсен йулашкийӗсене тӗппех пӗтерме пӗтӗм вӑйа ӗçлемеле. Кино ӗçне тата та пысӑк ӳсӗме çитермелле.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çумӗнчи кинематографи ӗçӗсен Комитетне тӑвас пирки постановлени йышӑнчӗ. Çав постановлени тӑрӑх автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсем çумӗнче кинематографи органӗсем тумалла. Кинофикаци Управленийӗсем пулаççӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 çулта мартӑн 23-мӗшӗнче „ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çумӗнчи кинематографи ӗçӗн Комитетне тӑвасси çинчен“ тата „Кинокартинӑсене тӑвас ӗçе организацилессипе лайӑхлатасси çинчен“ йышӑннӑ постановленисем кинематографинче ӗçлекенсемшӗн большевикла программӑ пулса тӑраççӗ. Çак постановленисем халӑх тӑшманӗсен туна сӑтӑрла ӗçсен йулешкийӗсене пӗтерме уççӑн калаççӗ, совет кино искусствине малала та чечеклентерсе ӳстермелли мӗн пур майсене туса параççӗ.

Чӑваш республикин 1938 çулхи кинофикаци планӗ пысӑк задачӑсем палӑртать. Кӑçалхи çул пирӗн район центрӗсенче çуринче те саслӑ киносем тумала, 25 саслӑ передвижкӑсем илсе килмеле, автомашинӑ çинчи саслӑ передвижкӑсен 7 пулмала. Кунсӑр пуçне, кашни кинотеатрӑнах тупӑшлӑн ӗçлемӗ тӑрӑшмала. Киномеханиксен пурнӑçпа йала условийӗсене лайӑхлатмала, вӗсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва, стахановла йухӑма сармала. Кинокартинӑсене кӑтартассине лайӑхлатмала, кино куракансем хушшинче культурӑлӑ-массӑлӑ ӗçе хаҫхинчен лайӑхрах организацилесе, ӗççыннисен кулленхи ӳссе пыракан культура ыйтӑвӗсене çырлахтарса пымала.

И. Терентйӗв.

Тӳрлетни

„Чӑваш Коммунӗн“ ӗнерхи номерӗнче Чӑваш Тӗпстатькомӗн Х-мӗш Çеççийӗ уçӑлни çинчен пӗлтернинче йалӑш кайнӑ. Кун йӗрки иккӗмӗш ыйтупа И. З. Захарӑв йулташ доклад тӑвать.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМЕНАВ.

Водопйанӑв йачӗпе тӑракан Шупашкарти Тир-сӑран савӑчӗпе атӑ-пушмак хапрӑкне
Бухгалтӗр-калькулятӑр—1
Счетовод—2
Хурал тӑма—3 çын
тата атӑ-пушмак ӗçне вӗренме (арçынсем тата хӗрарӑмсем) 18 çултан иртнисем
КИРЛӖ.

Чӑвашйӑмарпромснабсбыт
20 лаша вайлӗ
КАТТӖР СУТАТЬ.
Çак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар, Кадикӑв урамӗ, 7. Вӑрманпромснабсбыт.

„Чӑваш Коммунӗ“ çырӑнса илмели хаксем: 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха—2 т. 50 пус. Алçырӑвӗсене кайала памаççӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 171. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. л. ... см. 1—1 п. л.